Д64
2644-чув

В. Долгов

# ĔМĔРЕХ ПАРХАТАРЛĂ ТУСЛĂХ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ · 1958

В. Долгов

К74.03
Д64

# ЁМӖРЕХ ПАРХАТАРЛӐ ТУСЛӐХ

ПРОВЕРЕНО
1959

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР. 1958.

ПРОВЕРЕНО
2007

10291 чув.

Чувашская республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР

Эпир пурăнакан çĕршывăн, совет халăхĕсен пуян та паха историйĕ çакна ĕнентерӳллĕн кăтартса парать: халăхсен туслăхĕ пĕр кун хушшинче çуралман, вăл ĕмĕр-ĕмĕр ӳссе, çирĕпленсе пынă. Ăна пуçлакансем, çирĕплетекенсем — халăхсен ырă кăмăллă, тӳрĕ ĕмĕтлĕ ывăлĕсем, çутă пуласлăхшăн, халăх телейĕшĕн кĕрешекен паттăрсем; ăна тĕреклĕх вăйĕ паракансем, ĕç илемĕпе, кĕрешӳ хăвачĕпе пуянлатакансем — ĕççынниесем хăйсем, халăхсем хăйсем.

Ĕçре, кĕрешӳре çуралнă, тĕрекленнĕ туслăх яланах çирĕп, яланах çутă. Ăна нимĕнле йывăрлăх та хавшатаймасть, кун-çул тусанĕ те тĕксĕмлетеймест, пачах урăхла, вăл, пурăна-киле тата та çирĕпленсе, илемленсе пырать.

Çавăн пек туслăхсенчен пĕри — Илья Николаевич Ульяновпа Иван Яковлевич Яковлев хушшинчи ырă туслăх. Вĕсен туслăхĕ халăхшăн, тăван çĕршывшăн тăвакан пархатарлă ĕçре пуçланса кайнă.

Илья Николаевичпа Иван Яковлевич вырăс халăхĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи ĕмĕрхи туслăха илем кӳнĕ, вĕсем, килес ăрусемшĕн паха тĕслĕх пулса, пирĕн çĕршыв кун-çулĕн историне тивĕçлипе кĕнĕ.

И. Н. Ульянов — вырăс çынни, чаплă педагог-новатор, просветитель-демократ пулнă, вăл — аслă Ленин ашшĕ; И. Я. Яковлев — чăваш çынни, педагог-просветитель, демократ, писатель, чăваш çырулăхне йĕркелекенĕ, малтанхи чăваш букварĕн авторĕ, — çак çынсем иккĕшĕ те халăхшăн, ăна çутта кăларассишĕн, унăн ăс-тăнне аталантарассишĕн пĕтĕм чунтан тăрăшнă.

Илья Николаевич Ульянов 1831 çулти июнĕн 26(14)-мĕшĕнче Аçтăрхан хулинче çуралнă. Унăн ашшĕ, Николай Васильевич, ялта хресчен килйышĕнче ӳссе çитĕннĕ. Çитмен пурнăç пирки вăл ялтан Аçтăрхан хулине куçнă та хула аяккинче пĕчĕк çурт илнĕ, çĕвĕ çĕлесе пурăнма тытăннă. Чухăн çĕвĕçĕн

çемйи ӳссе кайнӑ. Ачисем пурте вӗренме тӑрӑшнӑ, анчах нихӑшӗ те шкула çӳреймен, — çуклӑх чарса тӑнӑ.

1838 çулта Николай Васильевич вилнӗ. Тӑватӑ ача тӑлӑха юлнӑ. Çак тӑлӑх-туратсенчен асли, Василий ятли, 16 çула кайнӑ, кӗçӗнни 7 çулта çеç пулнӑ.

Василий Ульянов, ашшӗ вырӑнне юлса, йӑмӑкӗсемпе шӑллӗне хӑй ӗçлесе илнӗ пур-çук укçипе усранӑ, ӗçлеме вӗрентнӗ. Пиччӗшӗ куллен-кун пулӑшнипе Илья Николаевич хут вӗренме тытӑннӑ. 1843 çулти кӗркунне вӑл Аçтӑрхан хулинчи гимназие кӗнӗ.

И. Н. Ульянов гимназире пур ӑслӑлӑха та тӗлӗнмелле лайӑх вӗренсе пынӑ. 1850 çулта кӗмӗл медальпе вӗренсе тухнӑ.

Гимназире вӗренме çӑмӑлах пулман: Аçтӑрхан гимназийӗнчен И. Н. Ульяновпа пӗрле тӑватӑ ача çеç вӗренсе тухнӑ. Вӗсенчен пӗри Хусан университетне кайса кӗнӗ. Çакӑ вӑл И. Н. Ульянов пулнӑ. Университетра вӑл физикӑпа математика факультетӗнче вӗреннӗ.

Хусанти университетра XIX ӗмӗрӗн пуçламӑшӗнче ӗçленӗ профессорсем хушшинче нимӗçсем ытларах пулнӑ. Вырӑс культури ӳссе пынӑ май, çав ӗмӗрӗн 30—40-мӗш çулӗсенчен тытӑнса, Хусан университетӗнче те вырӑс профессорӗсен йышӗ нумайлансах пынӑ. Вӗсем хушшинче малта пыракансенчен пӗри — вырӑссен аслӑ математикӗ, Н. И. Лобачевский профессор пулнӑ. Çамрӑк Ульянов унӑн лекцийӗсене питех те пысӑк хаваслӑхпа итленӗ, пуян шухӑшӗсене ӑса илнӗ.

Йывӑр пурнӑçа пӑхмасӑрах, И. Ульянов 1854 çулта Хусан университетне вӗренсе пӗтернӗ, хӑйӗн çырса панӑ ӗçӗшӗн математика наукисен кандидачӗн ятне илнӗ.

Университетран вӗренсе тухсан, Илья Николаевич Пензӑра, Чулхулара тӗрлӗ вӑтам шкулсенче педагог пулса ӗçлет. 1869 çулти сентябрӗн 1-мӗшӗнче ӑна Чӗмпӗр кӗпӗрнине халӑх шкулӗсен (училищисен) инспекторӗ пулса ӗçлеме куçараççӗ. (1874 çултан тытӑнса вӑл Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи халӑх училищисен директорӗ пулса ӗçлет.)

И. Н. Ульяновӑн кӗске биографийӗнчен çакӑ курӑнать: унӑн пурнӑçӗ Атӑл тӑрӑхӗнче иртнӗ — ача чухне Аçтӑрхан хулинче пурӑннӑ, Хусанта вӗреннӗ; çитӗнсе çитсен Пензӑра, Чулхулара, Чӗмпӗрте ӗçленӗ. Унӑн ӗçӗ Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсен историйӗпе тачӑ çыхӑнса тӑрать. Çавӑнпа та Атӑл тӑрӑхӗнчи халӑхсем Илья Николаевич ятне уйрӑмах ӑшшӑн асӑнаççӗ.

* * *

Иван Яковлевич Яковлев 1848 çулта апрелӗн 30-мӗшӗнче Хусан кӗпӗрнинче, Пӑва уездӗнчи Кӑнна Кушки ялӗнче çуралнӑ. Вӑл 82 çула яхӑн пурӑннӑ.



Илья Николаевич Ульянов (1831—1886).

И. Я. Яковлевӑн кун-ҫулӗ йывӑр пулнӑ. Вӑл тӑлӑх-турат пурнӑҫӗпе пурӑнса ӳснӗ: ҫуралсан икӗ кунтанах амӑшӗ вилнӗ, ӑна хӑйӗн ашшӗне курма та тӳр килмен. Тӑлӑх ачана Пахомов хушаматлӑ ҫынсем ывӑллӑха илнӗ. Алӑра юлнӑ ачана кӳршӗ хӗрарӑмӗ хӑйӗн кӑкӑр сӗчӗпе тӑрантарса ӳстернӗ. Ватӑ Пахомов, ҫар службинче пулса, 1854—1855 ҫулсенче Севастополь хулине хӳтӗлесе паттӑра тухнӑскер, Иван ҫитӗнерехпе суккӑрланнӑ, ӗҫлейми пулнӑ. Ӑна вара ҫамрӑк Яковлев хӗлӗн-ҫӑвӗн алӑ вӗҫҫӗн ҫавӑтса ҫӳренӗ.

1856 ҫулта ҫуркунне Ивана уйра ӗҫленӗ ҫӗртенех Пӑрӑнтӑкри удел шкулӗнче вӗренме илсе кайнӑ. Анчах ку хутра ӑна вӗренме май килмен, вӑл чечче (шатра) чирӗпе чирлесе таврӑннӑ та вӗренӳре кая юлнӑ. Ҫитменнине тата тепӗр инкек сиксе тухнӑ: пӗррехинче вӑл ыйхӑпа сентре ҫинчен урайне персе аннӑ та пуҫне шӑтарнӑ, виҫӗ кун хушши ӑнсӑр выртнӑ. Тепӗр ҫулхине Иван Яковлев каллех вӗренме кайнӑ. Вӗреннӗ чухне Мушкеев хушаматлӑ вырӑссем патӗнче хваттерте пурӑннӑ. Мушкеевсем ӑна хӑйсен ачине пӑхнӑ пекех пӑхнӑ, ӗҫчен пулнӑшӑн, тӑрӑшса вӗреннӗшӗн, тӳрӗ кӑмӑлӗшӗн юратнӑ.

Иван Яковлевич ку шкултан 1860 ҫулта вӗренсе тухнӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн 12 ҫулхи Яковлева Чӗмпӗре, ҫӗр виҫекенсене хатӗрлекен шкула яраҫҫӗ. Унта вӑл виҫӗ ҫул вӗренет. Шкултан тухсан, ҫӗр виҫекен пулса ӗҫлеме тытӑнать, уйӑхне 10 тенкӗ шалу илекен пулать.

1867 ҫулта И. Я. Яковлев ҫӗр виҫекенӗн йывӑр ӗҫӗнчен хӑтӑлать те гимназие кӗме икӗ ҫул хушши хатӗрленет. Тӑрӑшса хатӗрленни харама кайман: 1868 ҫулта Иван Яковлевич тӳрех гимназин 5-мӗш класне кӗрет, унтан ҫулсерен класран класа ӑнӑҫлӑ куҫса пырать. 1870 ҫулта вара ҫак гимназирен ылтӑн медальпе вӗренсе тухать. Ҫав ҫулхинех Яковлев Хусанти университетӑн математика факультетне вӗренме кӗрет, анчах ку факультет ӑна килӗшмен, ҫавӑнпа та вӑл часах историпе филологи факультетне куҫнӑ.

Хусанти университетран 1875 ҫулта вӗренсе тухсан, И. Я. Яковлева Хусан вӗренӳ округӗнчи чӑваш шкулӗсен инспекторӗ туса хураҫҫӗ.

Гимназие кӗнӗ ҫулхине Иван Яковлевич патне Чӗмпӗре икӗ чӑваш ачи — Алексей Рекеевпа Игнатий Иванов — пыраҫҫӗ. Ивановне ашшӗсем ҫавӑн чухнех каялла тавӑраҫҫӗ (вӑл малтанах пӑртак вӗреннӗ пулнӑ). Кӑштах вӑхӑт иртсен, тата виҫӗ ача персе ҫитеҫҫӗ. Иккӗшӗ чӑваш, Егор Улюкинпа Кашкаров, тепри вырӑс ачи — Иван Исаев пулнӑ. Хулана килнӗ ачасене И. Я. Яковлев вӗрентме тытӑнать, вӗсем валли репетитор ӗҫӗпе тупнӑ укҫапа кӗнекесем илет, тӑрантарать...

Ҫавӑн чухне Яковлев отставкӑри гварди полковникӗ



Иван Яковлевич Яковлев Хусан университетӗнче вӗреннӗ чухне. 1870 ҫ.

С. Д. Раевский патĕнче пурăннă. Çак полковник, хăй Питĕре куçса кайсан, Чĕмпĕре телей шыраса пынă тăвата ачана та хăйĕн çуртĕнче пурăнма ирĕк панă. Шăпах çав çуртра, Яковлев гимназистăн пĕчĕк пӳлĕмĕнче, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ пуçланса кайнă.

Тăвата ачаран виççĕшĕ—Рекеев, Исаев, Кашкаров—чиперех вĕренеççĕ. Тăваттăмĕшĕ, Улюкин хушаматли, хулари йывăрлăха тӳсеймесĕр, вĕренме пăрахнă та яла таврăннă.

Вунă çула яхăн иртсен, 1877 çулта, Чĕмпĕрти чăваш шкулне учительсем хатĕрлекен шкул правине параççĕ. Тĕрлĕ тумхахсене, юриех кансĕрленисене, хĕсĕрленисене пăхмасăрах, чăваш шкулĕ çултан-çул аслăланса, йышланса пынă. 1916 çулта унта 335 ача вĕреннĕ, вĕсенчен 143-шĕ хĕрача пулнă.

И. Я. Яковлев тăрăшнипе чăвашсем хушшинчи шкулсен хисепĕ нумай ӳснĕ: 1917 çул тĕлне 500 тарана çитнĕ. Вĕсенче нумайăшĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсем ĕçленĕ.

Иван Яковлевич, чăваш халăхĕн чи чухăн сийĕнчен тухнăскер, инкек-синкек тӳссе, хурапа шурă курса ӳснĕскер, хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне, ăс-хакăлне, пĕлĕвĕсене тăван халăхне панă.

* * *

И. Н. Ульянов Чĕмпĕре куçнă чухне 38 çула, И. Я. Яковлев—21 çула çитнĕ. Илья Николаевич университетран вĕренсе тухнă çын пулнă. Иван Яковлевич ку вăхăтра гимназире çеç вĕреннĕ-ха. Ырăнĕсем енчен пăхсан, пĕри пысăк ырăнта ĕçлекен, тепри чухăн гимназист пулнă. Анчах та, çак пысăк уйрăмлăхсене пăхмасăрах, Илья Николаевич чăваш сыннипе, Иван Яковлевичпа, çывăх паллашса, çирĕп туслашнă. Вăл унăн ĕмĕчĕсене ырланă, пулăшма тытăннă.

И. Н. Ульянов Чĕмпĕре куçса пырсанах, унăн ĕçри вăй-халĕ çинчен, вĕресе тăракан хастарлăхĕпе ырă кăмăлĕ çинчен ун чухне Чĕмпĕр хулинче пурăнакан публицистсенчен пĕри В. Н. Назарьев çапла çырнă: «Малтанхи кунтан пуçласах пĕтĕм чун-чĕрине ĕçе паракан çынсем, И. Н. Ульянов пек çынсем, пирĕн пата килсе тухнине чăннипех те тĕлĕнмелле ĕç тесе калас пулать», —тенĕ.

Шăпах ĕнтĕ çав çын—пĕтĕм чун-чĕрине ĕçе паракан çын—И. Я. Яковлевăн учителĕпе тусĕ, пĕр пек шухăшпа ĕçлекенĕ, ăна йывăр вăхăтсенче пулăшаканĕ, хӳтĕлекенĕ пулса тăнă.

Çавăн чухне И. Я. Яковлевăн ученикĕсем, чăваш ачисем, А. Рекеев, В. Кашкаров тата вырăс ачи Исаев Чĕмпĕрте вĕренсе пурăннă. Çак ачасене, И. Н. Ульянов пулăшнипе, И. Яковлев 1868 çулта уездри училищĕне вĕренме вырнаçтарнă. Унта

вăл вĕсене темиçе çул хушши хăйĕн укçи-тенкипе вĕрентсе усранă. Рекеевĕ 1870 çулта уездри училище çумĕнчи педагогика курсне вĕренме кĕнĕ.

Çав ачасем Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пуçламăшĕ пулнă. Унта чăваш ачисем пырсах тăнă. 1871 çулта чăваш шкулĕнче вĕренекенсен йышĕ 26 ачана çитнĕ.

И. Я. Яковлев Хусана университета вĕренме кайсан, унăн пĕчĕк шкулне пĕрмаях Илья Николаевич пулăшса, сăнаса тăнă, ăна, 1871—72 вĕренӳ çулĕнчен тытăнса, укçа партармалла тунă, вĕренекенĕсене земствăран стипенди партарнă.

Шкулта вĕренекенсенчен аслăраххи А. В. Рекеев пулнă. Çавăнпа та Яковлев университета кайсан ăна хăй вырăнне хăварнă. Анчах çав вăхăтра Рекеевăн салтака кайма ят тухнă, ăна вара салтака илсе кайнă. И. Я. Яковлев, хăйĕн ученикне патша çарĕнчен хăтарса, ăна шкултах хăварас тесе, питех те хытă тăрăшнă.

А. В. Рекеев хăйне çартан мĕнле хăтарни çинчен 1906 çулта çырнă асаилĕвĕсенче тĕплĕн каласа панă.

1871 çулти январĕн 5-мĕшĕнче Чĕмпĕре Алексей Рекеев патне аслă пиччĕшĕ Василий Рекеев пынă. Вăл Алексее салтака илес пирки яла хут пыни çинчен пĕлтернĕ. Çакăн чухне унта Иван Яковлевич та пулнă. Ку хыпар пурне те хуйха ӳкернĕ. «Пирĕн хаваслă ушкăн,—тет А. Рекеев хăйĕн асаилĕвĕсенче,— часах хурлана пуçларĕ. Ачасем пурте шăпланчĕç, Иван Яковлевич патне, вăл мĕн каласса кĕтсе, ассăн сывласа, ним калама аптраса пухăнчĕç. Иван Яковлевич хăй пĕр сăмах шарламасăр, тем çинчен шухăшласа ларать».

Ларсан-ларсан Иван Яковлевич таçта тухса кайнă. Тепĕр кунхине, январĕн 6-мĕшĕнче, вăл Н. И. Ильминский профессор патне çыру çырнă. Ăна вăл: ĕнер эпĕ Ульянов патĕнче пултăм,— тесе пĕлтерет.

Тепĕр уйăхран Рекеева салтака илсе кайнă. Тула хулине çитернĕ те Бутырский полка вырнаçтарнă. Çав полкра чăваш ачи, пулас учитель, темиçе уйăх хушши службăра тăнă.

И. Н. Ульянов пулăшнипе Иван Яковлевич, Рекеева салтакран хăтарас тесе, унта та кунта хут çырма тытăннă: Çутĕç министрĕ патне, Çарĕç министрĕ патне çырнă. Юлашкинчен ку ĕç II-мĕш Александр патша патнех çитнĕ.

Çакăн чухне тата тепĕр йывăрлăх кĕтмен çĕртен сикçе тухнă: чăваш йăлине пула метрикăра «Рекеев» хушамата çырман пулнă, çавăнпа та Алексее салтака Васильев хушаматпа (ашшĕ ячĕпе) илсе кайнă. Кун пирки те нумай хут çӳретме тивнĕ. Анчах ку çеç те мар,—тата тепĕр пысăк йывăрлăх хăратса пăрахнă: Алексее çар службинчен хăтарсан, унăн вырăнне аслă пиччĕшне Василие салтака ямалла пулнă. И. Я. Яковлевпа

И. Н. Ульянов çак инкексене пĕрин хыççăн теприне сирсе пынă, вĕсем тăрăшни харама кайман: Алексей Рекеева салтакран пуçĕпех тавăрнă. Кун пирки вара Çутĕç министрĕ çакăн пек хут çырса пĕлтернĕ:

«Государь Император по Всеподданнейшему докладу г. Министра Народного Просвещения в 28 день минувшего апреля... соизволил на освобождение воспитанника педагогических курсов при Симбирском уездном училище крестьянина из чуваш Алексея Рекеева от исполнения рекрутской повинности с совершенным исключением его, не в пример другим, из числа работников и без перенесения этой повинности на старшего брата его Василия Рекеева».

Рекеева çар службинчен хăтарма И. Я. Яковлева пулăшаканĕ И. Н. Ульянов пулнă, ун çинчен И. Я. Яковлев Алексей Рекеев патне 1872 çулти майăн 13-мĕшĕнче янă çырăвĕнче: «Сана хăтараканĕ ĕнтĕ Илья Николаевич, мĕншĕн тесен вăл сан пирки попечитель патне официальнăй хут çырчĕ», тесе пĕлтернĕ.[1]

И. Н. Ульянов чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасем патне пĕрмаях пырса тăнă, вĕсем пурăнакан çуртра пулнă. Вĕренекен чăваш çамрăкĕсем Ульяновсен килне çÿренĕ. Ку чăнах та çавăн пек пулни Алексей Рекеевăн И. Я. Яковлев патне Хусана 1870 çулти ноябрĕн 14-мĕшĕнче янă çырăвĕнчен те лайăх курăнать. «Эпĕ начальствăпа питĕ лайăх пурăнатăп. Ульянов килĕнче эпĕ темиçе хут та пултăм, — тесе çырать унта Рекеев. — Вăл мана яланах пит те лайăх йышăнать, мана тĕпеле ирттерсе лартать, ун патĕнче каймассерен чылай ларатăп».[2]

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче малтанхи çулсенче вĕреннĕ Иван Исаев 1871 çулта А. Рекеев патне çакăн пек çырнă: «Июнĕн 18-мĕшĕнче пирĕн патра Илья Николаевич Ульянов пулчĕ; эпир ăна хăшпĕр юрăсене юрласа патăмăр; унтан вăл ачасенчен «Родное слово» кĕнеке тăрăх мĕн-мĕн вĕреннисене ыйтса пĕлчĕ» (А. Рекеев асаилĕвĕсенчен).

И. Н. Ульянов чăваш халăхне çутта кăларас ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен И. Я. Яковлев хăйĕн çырăвĕсенче каласа парать. Сăмахран, 1872 çулти июнĕн 21-мĕшĕнче Н. И. Ильминский патне И. Я. Яковлев: «Ульяновпа эпир питĕ лайăх пурăнатпăр, вăл питĕ аван çын, кирлĕ çĕрте вăл яланах пулăшу пама хатĕр,—ку вара пирĕншĕн калама çук паха», тесе çырать.[3]

И. Н. Ульянов хăйĕн отчечĕсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулне ырласа çырать, лайăх хак парать. 1871 çулта çырнă отчетра:

---

[1] **А. И. Кондаков.** Директор народных училищ И. Н. Ульянов. Изд-во Академии педагогических наук РСФСР, 1948, 47 стр.

[2] Çавăнтах, 48—49 стр.

[3] Çавăнтах, 47 стр.

«Çак шкул кĕске вăхăт хушшинчех чăвашсене питĕ кăмăла кайрĕ, ашшĕсем хăйсен ывăлĕсене 100 çухрăмран тата унтан та инçерех вырăнсенчен те илсе килеççĕ...», тет.[1]

1871 çулти сентябрьте чăваш шкулне укçа-тенкĕ пама ыйтса, попечитель патне И. Н. Ульянов çакăн пек çырнă: «Асăннă шкул, Калашников ертсе пынипе, земствăшăн та, çавăн пекех чăваш хресченĕсемшĕн те шанчăклă пулса тăрать... Вĕренекенсен йышĕ сахалтан та 20 çынна çити ӳсме пултарать. Ку вара сахал йышлă халăхсен шкулĕсем валли учительсем çитмен чухне çав тери лайăх, чăваш хресченĕсем хăйсен ачисене (учителе кăларас тесе) вырăс çырулăхне вĕрентме пани—калама çук ырă... Çаксем пурте ĕнтĕ çав шкула, вырăнти кирлĕхе пула пуçланса кайнăскере, пулăшмалли çинчен каласа параççĕ»[2].

И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлевăн пархатарлă туслăхĕ пуринчен ытла халăха вĕрентес, халăхшăн тăрăшас ĕçре тĕреклене пынă. Иван Яковлевича Хусан университетĕнче вĕреннĕ вăхăтрах Илья Николаевич тĕрлĕ канашсемпе пулăшса тăнă, ĕçре хавхалантарнă. Вĕсем пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретнĕ. Çав çырусем ахаль çырусем пулман—халăха вĕрентесси, шкулсем уçасси, кĕнекесем кăларасси, вĕсене халăх хушшине сарасси тата ытти нумай ĕçсем пирки çырнă çырусем пулнă. Акă, сăмахран, И. Н. Ульяновăн 1873 çулта февралĕн 22-мĕшĕнче тата апрелĕн 5-мĕшĕнче И. Я. Яковлев патне çырнă икĕ çырăвне илсе пăхар.[3]

Илья Николаевич пĕрремĕш çырăвĕнче Иван Яковлевича корректура вуласа панăшăн тав тăвать. Унтан вăл пулас учительсем Хусана тухса кайни çинчен пĕлтерет. Учителе вĕренме кайнă çамрăксене Н. И. Ильминский профессорпа И. Я. Яковлев пулăшасса шанса, Илья Николаевич: вĕсене учительсен семинарине вырнаçтарсан е, май килсен, экзамен тыттарса, учитель ятне илни çинчен свидетельствăсем парсан, питĕ аван пулĕччĕ, тет. Ку ĕçре вăл Иван Яковлевич çине те пысăк шанчăк хунă. Çавăнпа ĕнтĕ унăн тусĕ: «Вĕсене вырнаçтарма Эсир хăвăрăн пĕтĕм вăй-халăра парасса эпĕ шанса тăратăп»,—тесе çырнă. Çав вăхăтрах тата ку çырура И. Н. Ульянов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕшĕн тăрăшни те курăнать. «Чĕмпĕр шкулĕн хваттерне улăштарас пулать,—тенĕ çырура,—мĕншĕн тесен вăл нӳрĕ; çитменнине тата тăвăр, унта ată-пушмак мастерскойĕ уçма кансĕр; малашне ĕнтĕ хваттер тара илме 400 тенкĕ укçа параççĕ».

---

[1] «Итоги юбилейной научной сессии, посвященной столетию со дня рождения И. Я. Яковлева», ЧНИИ, Чувашгиз, 1949, 20 стр.

[2] **А. И. Кондаков.** Директор народных училищ И. Н. Ульянов, 48 стр.

[3] Ку çырусене 1957 çулти мартăн 17-мĕшĕнче «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсенче пичетленĕ (65-мĕш номерсене пăхăр).

Симбирскъ. 22 Февраля 1873 г.

Милостивый Государь,

Иванъ Яковлевичъ!

Письмо Ваше отъ 15 Февраля я получилъ и благодарю Васъ за труды по корректурѣ.— Сегодня отправляются будущіе учители въ Казань и я пишу Николаю Ивановичу Ильминскому о томъ, что весьма полезно было бы помѣстить ихъ въ учительскую семинарію или, если этого сдѣлать нельзя, то, по крайней мѣрѣ, подвергнуть ихъ экзамену и выдать имъ свидѣтельства на званіе учителей, на случай набора.— Относительно матеріальнаго обезпеченія я увѣренъ, что Вы употребите всю свою энергію, чтобы устроить ихъ получше.— Квартиру для Симбирской школы слѣдовало бы перемѣнить во 1х потому, что она сыра, во 2х потому, что тѣсна и является затрудненіе открыть сапожное мастерство, и, наконецъ, въ 3х потому, что на нашу квартиру теперь будетъ отпускаться 400 р.



Сверхъ того, квартира, по моему
мнѣнію, имѣетъ вліяніе на
здоровье Калашникова, кото-
рый до сихъ поръ еще кашляетъ
и вообще плохо поправляется.
Я думаю начать обученіе са-
пожному мастерству
теперь же, но трудно
найти мастера, который
былъ бы трезвъ. Сынъ кухарки,
про котораго Вы говорили,
ненадеженъ: я слышалъ, что
его прогналъ хозяинъ.—
Что касается до введенія ремеслъ
въ школахъ, то тамъ еще
больше затрудненій, пото-
му что хорошіе мастера
самоучки туда не
поѣдутъ. Если бы Вамъ
удалось пріѣхать сюда къ
страстной недѣлѣ, то, я
увѣренъ, Вы помогли бы
мнѣ относительно обученія
ремесламъ.
Прощайте, Иванъ Яковлевичъ,
пріѣзжайте, если можно, въ
Симбирскъ, а если невозможно
Вамъ будетъ пріѣхать, то
пишите Ваши мнѣнія,
[illegible]
уважающій Васъ И. Ульяновъ

И. Н. Ульянован И. Я. Яковлев патне янӑ ҫырӑвӗсенчен пӗри. 1873 ҫ.

И. Н. Ульянов ҫак ҫырӑва питех те ӑшӑ сӑмахсемпе ырӑ сунса пӗтерет: «Сывӑ пулӑр, Иван Яковлевич, май пулсан, Чӗмпӗре килӗр-ха, килме май пулмасан, хӑвӑрӑн шухӑшӑра ҫырса пӗлтерӗр, вара Сире хисеплесе тӑракан И. Ульянов питӗ те савӑннӑ пулӗччӗ», тет.

И. Н. Ульяновӑн иккӗмӗш ҫырӑвӗнче те сӑмах халӑха вӗрентес ӗҫ пиркиех пырать, ку ҫыру та ҫак икӗ хастар ҫын хушшинчи паха туслӑха кӑтартса парать.

1873 ҫулта И. Я. Яковлев «Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки» ятлӑ кӗнеке кӑларнӑ пулнӑ. Ҫав «Букваре» вӑл Хусантан Чӗмпӗре И. Н. Ульянова ярса панӑ. Кӗнекене илнӗ хыҫҫӑн Илья Николаевич: «Сирӗн кӗнекӗре пичетлесе пӗтернӗшӗн питӗ савӑнатӑп; хам енчен ӑна чӑваш шкулӗсенче сарма тӑрӑшӑп», тесе ҫырнӑ.

Ҫак ҫырурах вӑл Иван Яковлевича Кӑрмӑшра пулнӑ учительсен съезчӗ ҫинчен ҫырнӑ отчета пичетлесе кӑларнӑ чухне тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн тав тӑвать, 1872 ҫулшӑн земство пирки ҫырнӑ ҫулталӑк отчетне пичетленине сӑнаса пыма ыйтать, Хутарта шкул ҫуртне тума тытӑнни, Кӑнна Кушкинче шкул ҫуртне тума Игнатий Иванова 75 тенкӗ укҫа пани ҫинчен пӗлтерет (Игнатий Иванов—пӗр вӑхӑтра Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ ҫын, учитель, чӑвашсен малтанхи писателӗсенчен пӗри пулнӑ).

Ҫакӑн пек ӑшӑ ҫырусем лайӑх туссем хушшинче ҫеҫ ҫӳреме пултарнӑ. И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев пӗр-пӗрне чун-чӗререн хисепленӗ, пулӑшнӑ, пӗр-пӗрне шаннӑ, хӑйсен шухӑшӗсене ҫырусем урлӑ пӗлтернӗ, тӗл пулсан, каласа панӑ. Ҫак туслӑх халӑх ӗҫӗнчи туслӑх пулнӑ, вӗсен тӗлӗнмелле паха туслӑхӗнче аслӑ вырӑс халӑхӗпе чӑваш халӑхӗ хушшинчи туслӑх тӑван пиччӗшӗпе шӑллӗ хушшинчи таса туслӑх пек палӑрса тӑнӑ.

И. Н. Ульянов хӑйӗн чи лайӑх ученикӗсене (вӗсене халӑх хушшинче «ульяновецсем» тенӗ) — В. А. Калашникова тата А. Н. Сурова Чӗмпӗрти чӑваш шкулне чӑваш ачисене вӗрентме янӑ. Ульяновецсем вӗрентнӗ чӑваш учителӗсем вара «Ульянов инспектор ученикӗсен ученикӗсем пулнӑ, урӑхла каласан... «ульяновецсен» ҫӗнӗ ӑрӑвӗ пулнӑ», тет А. И. Кондаков.[1]

В. А. Калашников часах Ульяновсен ачисен килти учителӗ пулса тӑнӑ. Вӑл Александр Ильича тата Владимир Ильича гимназие кӗме хатӗрленӗ. В. И. Ленина вӗрентнӗ учительсем чӑваш ачисене вӗрентни пире савӑнтаракан паха тӗслӗхсенчен пӗри пулса тӑрать.

И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлевӑн тепӗр ученикӗ, чӑвашсен ун чухнехи писателӗсенчен пӗри, «Ҫынна сиен тӑвакан, ху та ҫавна курӑн», «Ҫынна мулшӑн туман, мула ҫыншӑн тунӑ», «Ҫынна

[1] **А. И. Кондаков.** Директор народных училищ И. Н. Ульянов, 87 стр.

усал тăвакан — хăй те усал курать» тата ытти калавсен авторĕ, эпир малтарахра асăннă Игнатий Иванович Иванов учитель (1848—1885) хăйĕн ĕçĕнче яланах И. Н. Ульяновран пысăк пулăшу илсе тăнă. Сăмахран, 1871 çулти мартăн 14-мĕшĕнче Игнатий Иванов, учитель пулма хатĕрленекенскер, И. Я. Яковлева çакăн пек çырса пĕлтернĕ: «Ĕçсем лайăх пыраççĕ, ачасем аван вĕренеççĕ. Пирĕн патăмăрта Илья Николаевич Ульянов пулчĕ, вăл манпа хăшпĕр ĕçсем пирки калаçрĕ те хамăр ялта лартмалли шкулăн планне тума хушрĕ...»[1]

Çак çулхине И. Н. Ульянов тăрăшнипе Çутĕç министерстви Пăва уездĕнчи Кăнна Кушкинче, Яковлевпа Иванов çуралнă ялта, шкул уçмалла тунă.

1872 çулти мартăн 8-мĕшĕнче Иван Яковлевич патне И. Иванов çакăн пек çырнă: «Эпĕ Ульянов патĕнче пултăм. Унпала ĕçсем пирки нумай калаçрăмăр... Халĕ ĕнтĕ вăл эпĕ каласа панипе савăнса хĕпĕртерĕ. Ульянов мана: ачасене Ушинскин «Родное слово» ятлă кĕнеки тăрăх вĕрентмелле, терĕ».[2]

1873 çулта Игнатий Иванова учительтен кăларнă пулнă. Çакăн хыççăн вăл И. Н. Ульянов патĕнче пулать, инспектор мĕн каланисене Иван Яковлевича çырса пĕлтерет. Октябрĕн 17-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче: «Ульянов мана питех те хĕрхенет», тет. Ноябрĕн 25-мĕшĕнче янă çырăвĕнче тата: А. И. Баратынский килĕшсен, Илья Николаевич мана Çĕнĕ Ильмово шкулне яма шантарать, тесе пĕлтерет.[3]

Çапла, И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлевăн ырă кăмăлĕ, вĕсен туслăхĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасене, чăваш учителĕсене, чăвашсен малтанхи писательне Игнатий Иванова ĕçре хавхалантарнă, унăн шухăш-кăмăлне çирĕплĕх панă.

И. Н. Ульянов чăвашсем хушшинче шкулсем ытти çĕрте те уçнă. Сăмахран, Хутарта (Çĕмĕрлĕ районĕ) 1870 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче чăвашсене шкул уçса панине асăнма пулать.

И. Н. Ульянов Хутар салинчи чăвашсем патĕнче 1870 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче, 1871 çулти декабрĕн 17-мĕшĕнче, 1872 çулти июнĕн 11-мĕшĕнче пулнă. Хутарти шкулта ĕçлеме вăл хăй вĕрентнĕ çынна—Александр Рождественский учителе янă. Çамрăк учителе Илья Николаевич тăтăшах пулăшса тăнă. 1872 çулта Рождественские И. Н. Ульянов хăйпе пĕрле Мускава Политехнически выставкăна илсе кайнă.

Хутар шкулĕн историйĕ И. Н. Ульяновăн пысăк тимлĕхне, вăл чăвашсемшĕн мĕн тери хытă тăрăшнине кăтартса парать.

Кăрмăш уездĕнчи земство управи Хутарта шкул уçнине

---

1 **А. И. Кондаков.** Директор народных училищ И. Н. Ульянов, 49 стр.

2 Çавăнтах.

3 Отдел рукописей Госуд. библиотеки СССР им. В. И. Ленина, ф. 361—И. Я. Яковлев. (Ку çырусене В. Д. Димитриев шыраса тупнă.)

хирĕçлеме пăхнă, укçа пама килĕшмен. Çакна шута илсе, И. Н. Ульянов 1871 çулти апрелĕн 18-мĕшĕнче земство управине çапла çырнă: «1870 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче, шкул уçнă чухне, училищăна 12 ача вĕренме кĕнĕ, халĕ çак çулхи февраль уйăхĕнче, учитель пĕлтернĕ тăрăх, унта 28 ача вĕренет, чăваш ачисем кĕске вăхăтрах çавăн чухлĕн шкула çӳреме тытăнни, ман шутпа, Хутар салинче шкул уçма кирли çинчен каласа парать».[1]

Кайрантарахпа пĕлтернинчен тата акă мĕн курăнать: Хутар шкулĕнче 26 ача вĕреннĕ, вĕсенчен 7 вырăс, 19 чăваш пулнă. Çав шутра виçĕ вырăс, пĕр чăваш хĕрĕ вĕреннĕ.[2]

Шкул уçнă хыççăн тепĕр çултан Илья Николаевич Хутар шкулне ачасем мĕнле вĕреннине тĕрĕслеме килнĕ. Чăваш ачисем вырăсла та, чăвашла та аван ответсем панă. Çавăнтах вĕсен ашшĕ-амăшĕ, ачисене итлесе, савăнса ларнă. И. Н. Ульянова чунтан тав тунă.[3]

Илья Николаевич Хутарти шкула асрах тытнă, унта вăл кĕнекесем ярса тăнă. Хутар шкулĕн библиотекинче 1905 çулччене «Подарок Ходаровскому училищу—от инспектора народных училищ И. Н. Ульянова» тесе çырнă хуплашкаллă кĕнекесем пулнă.[4]

Хутар çыннисем хăйсен шкулне И. Н. Ульянов ятне, колхозне В. И. Ленин ятне панă. Вĕсем И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен шкул çуртне, 1873 çулта Илья Николаевич лартнăскере, халĕ те тимлĕн упраççĕ, И. Н. Ульяновăн манăçа тухми ятне ырă сăмахпа асăнаççĕ:

Кам халăхшăн çунать, ĕçлет —
Ун ячĕ халăхра манмаслăх пархатарлă.
Кунта Ульянова кашни пĕлет.
Хускат сăмах, сана вăл ответлет:
«Ăс-хакăл çуттине вăл сарнă.
Чăваш пӳртне вăл хĕвел пайăркине кĕртнĕ.
Çутта вăл чĕннĕ вак халăхсене.
Ун ывăлĕ—Ульянов-Ленин тăвăл чĕртнĕ,
Çĕнтернĕ пусмăр тĕнчине!»[5]

1870 çулта И. Н. Ульянов Хутара килни çинчен Хутарти хăшпĕр хресченсем халĕ те каласа параççĕ. Акă Ефрем Егоро-

---

[1] «Записки» ЧНИИ языка, литературы и истории. Вып. IV, 210—211 стр.
[2] Çавăнтах, 211 стр.
[3] **А. И. Кондаков.** Директор народных училищ И. Н. Ульянов, 50 стр.
[4] **Н. Веретенкин.** «Ходаровская школа» («Красная Чувашия» хаçат, 293-мĕш №, 1940 çулти декабрĕн 19-мĕшĕ). Николай Игнатьевич Веретенкин 1905—1917 çулсенче Хутар шкулĕнче ĕçленĕ.
[5] **Стихван Шавлы.** «И. Н. Ульянов уçнă Хутар шкулĕ» (Сăвăсемпе поэмăсем. Чăвашгиз, 1951 ç., 22—24 стр.).

10291 чув.
Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
Чебоксары Чувашской АССР



И. Н. Ульянов уҫнӑ Хутарти шкулта вӗреннӗ ҫынсем (сулахайран сылтӑмалла): К. П. Власов (92 ҫулта), И. Е. Мигушов (86 ҫ.), Н. К. Кириллов (90 ҫ.) тата С. И. Федоров (78 ҫ.). 1952 ҫулхи ӳкерчӗк.

вич Ногаев, ватă колхозник, И. Н. Ульянов уçнă шкула малтанхи çул кĕрсе вĕреннĕскер, 1940 çулта çакăн пек каласа панă:

«1870 çулта пирĕн яла Ульянов инспектор килнине эпĕ питĕ лайăх астăватăп.

...Хутар ялне тĕрлĕ пуçлăхсем пĕрмаях килсе тăратчĕç. Мĕншĕн тесен пирĕн ял витĕр мăн çул иртсе каятчĕ. Урядник та, старшина та час-часах килетчĕç. Пуçлăхсем яла çитсенех хресченсене хурал пӳртне пухатчĕç, хăратса-юнаса куланай пуçтарттаратчĕç. Чухăн пирки тĕрлĕ парăмсене тӳлесе татайманнисене саламатпа çаптарнисем те пулнă, хирĕçлесе мĕн те пулин калакансене тĕрмене те илсе каятчĕç. Пĕррехинче манăн аттене саламатпа хĕнесе чĕрме юн тунăччĕ. Çавăн хыççăн атте пĕр эрне хушши йынăшса выртрĕ...

И. Н. Ульянов килсен те, халăха хурал пӳртне пухăнма десятник хăваласа çӳрерĕ. Малтан ял çыннисем кăштах хăраса тăчĕç. Анчах ку çын шкул уçас ыйтупа килнине пĕлсен, хресченсем пухăва ним шикленмесĕрех пычĕç. Эпир те, хăшпĕр ачасем, пухăва кĕрсе, ватăсем хушшине тăтăмăр.

Çакă халĕ те куçа курăннă пек туйăнать. Тайлăк сĕтел хушшинче, ял старостипе Трофим Карповичпа юнашар, сарлака та çутă çамкаллă çын ларать. Тумтирĕ çинче çутă тӳммесем. Вăл хурал пӳртне кĕрекен хресченсене, кăмăллăн пуç тайса, лармa сĕнет. Çак кам иккенне староста каласа пачĕ. Эпир вара вăл Илья Николаевич Ульянов пулнине пĕлтĕмĕр.

Чăвашсем тĕттĕмре пурăнни çинчен, ачасене хутла вĕрентме кирли çинчен кĕскен каласа пачĕ инспектор.

И. Н. Ульянов сĕнĕвĕпе килĕшрĕç те хутарсем шкул уçма йышăнчĕç. Шкул çурчĕ пулман пирки ачасене Хритушка старик пӳртĕнче вĕрентмелле турĕç. Хресченсем Илья Николаевича шкул çурчĕ валли вăрман тупса пама ыйтрĕç. Инспектор вĕсемпе килĕшрĕ. Тепре килсен, И. Н. Ульянов шкул çурчĕ лартма панă йывăççене пăхма вăрмана хăй кайрĕ. Хресченсене чи лайăх чăрăшсене суйлаттарса кастарчĕ.

Пире шкул уçса паракан çын И. Н. Ульянов аслă Ленин ашшĕ пулнине эпир совет саманинче çеç пĕлтĕмĕр. Вăл шкулта чи пуçласа вĕренекенсенчен пĕри эпĕ пултăм».[1]

Ульянов шкулĕнче малтанхи çулсенче вĕреннĕ çынсем кăна мар, Хутарти кашни çынах, ватти те вĕтти те, И. Н. Ульянова, унăн ăсларан та ăслă ывăлне—В. И. Ленина чун-чĕререн тав тăвать.

Хутар шкулĕнче вĕреннĕ çынсем хушшинчен нумай-нумай специалистсем, хăйсен ĕçне ăста пĕлекен çынсем: тĕрлĕ наукăсен докторĕсемпе кандидачĕсем, журналистсем, врачсем, учи-

[1] Е. Е. Ногаев асаилĕвĕсене Хутарти И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен вăтам шкул учителĕ И. Е. Моисеев 1940 çулта çырса илнĕ.



Илья Николаевич ĕҫлесе пурăннă пӳлĕм. И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев ҫак пӳлĕмре хăйсен ĕҫĕсем пирки час-часах канашланă.

тельсем, инженерсем, агрономсем, офицерсем тата ыт. те тухнӑ. Юлашки ҫулсенче вӗренсе тухнисенчен нумайӑшӗсем институтсемпе университетсенче вӗренеҫҫӗ, заводсенче, колхозсенче тӗрлӗ ӗҫре ӗҫлеҫҫӗ.

И. Н. Ульянов вӑхӑтӗнче пулнӑ 38 чӑваш шкулӗнче вӗренекенсен йышӗ нумай ӳснӗ. Сӑмахран, вӗсенче 1870 ҫулта 1.484 ача вӗреннӗ пулсан, 1891 ҫулта вӗренекенсен йышӗ 2.650 ачана ҫитнӗ.

Ҫапла вара, ҫав ҫулсенче чӑвашсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе пӗрремӗш утӑм тунӑ.

И. Н. Ульянов Чӗмпӗрти чӑваш шкулне, кӗпӗрнери чӑваш шкулӗсене, И. Я. Яковлева, унти шкулсенче ӗҫлекен чӑваш учителӗсене ҫулсеренех пулӑшса тӑнӑ.

И. Я. Яковлев «чӑваш ачисене хут вӗрентес, вӗсем валли шкулсем тӑвас тӗлӗшпе час-часах ӑна (Ульянова.—*В. Д.*) хӑйӗн шухӑшӗсене каласа панӑ, Ульянов ӑна ҫак ӗҫре яланах пулӑшса пынӑ».[1]

И. Я. Яковлев та хӑйӗн шанчӑклӑ тусне пулӑшса тӑнӑ. Н. И. Алпатов каланӑ тӑрӑх, Иван Яковлевич Ульяновӑн чи ҫывӑх помощникӗ, чи ҫывӑх тусӗ, соратникӗ пулнӑ.[2]

«Директор пулса ӗҫленӗ чухне Илья Николаевич Иван Яковлевича пур тӗлӗшпе те пулӑшса пынӑ, вӗсем демократилле шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшпе, халӑха тата педагогикӑна юратса ӗҫлес тӗлӗшпе пӗр пек шухӑшлӑ ҫынсем пулнӑ...» «Паллах, Илья Николаевич Иван Яковлевича пур инстанцисенче те, «кӗпӗрнере» те, «округра» та хӳтӗлесе тӑман пулсан, чӑваш шкулӗ ҫирӗм ҫул хушши те пурӑнайман пулӗччӗ, ӑна тӑшмансем, патша тарҫи-тӗрҫисем таптаса тӑкнӑ пулӗччӗҫ».[3]

Ульяновпа Яковлев ҫемйисем пӗр-пӗринпе ҫывӑх та туслӑ пурӑннӑ. Мария Ильинична Ульянова хӑйӗн асаилӗвӗсенче: «Пирӗн киле аттене паллакансенчен, пуринчен ытла унпа пӗрле ӗҫлекен ҫынсем,—халӑх шкулӗсен инспекторӗсем, чӑваш шкулӗн заведующийӗ И. Я. Яковлев, чӑваш халӑхне ҫутта кӑларас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑскер, тата вӑтам шкулсемпе кӗҫӗн шкулсенче вӗрентекенсем пулатчӗҫ», тет.

Ашшӗ-амӑшӗсем пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнни вӗсен ачисене те туслӑ пурӑнакан тунӑ. Александр Ильичпа Владимир Ильич

---

[1] **Н. И. Алпатов.** Педагогическая деятельность И. Н. Ульянова, 1946, 89—90 стр.

[2] Ҫавӑнтах, 90 стр.

[3] «Иван Яковлевич Яковлев, 1848—1930», под ред. проф. Ф. Н. Петрова, 1948 г., 43, 45 стр.



Çамрăк Владимир Ульянов Н. М. Охотников чăваша университета кĕме хатĕрлет. 1886 ç. *(Л. Осинский художник картини тăрăх.)*

час-часах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пулнă.[1] Владимир Ульянов ашшĕпе пĕрле чăваш шкулĕн директорĕ патне çӳренĕ.[2]

1886—1887 çулсенче, Иван Яковлевич ыйтнипе, 16 çулти Владимир Ильич, хăйĕн вăхăтне тата вăйне шеллемесĕр, 26 çулти чăваша Никифор Михайлович Охотникова грек тата латин чĕлхисемпе, историпе экзамен пама хатĕрленĕ. Çакăн хыççăн Охотников, экзаменсене ăнăçлăн парса, университета вĕренме кĕнĕ.

Владимир Ильич çавăн чухне Н. М. Охотникова университета кĕме хатĕрлени çинчен Анна Ильинична Ульянова çапла çырать: Охотников «...чăвашчĕ, чăваш шкулĕнче преподаватель пулса ĕçлетчĕ. Математика вĕренес енĕпе вăл питĕ пултаруллăччĕ, çак предметпах вăл малалла ăсталанма тăрăшатчĕ. Математикăпа физикăна вăл гимнази курсĕшĕн экзамен тытмалăх хăй тĕллĕнех хатĕрленчĕ. Анчах университета кĕрес тесен, гимназири пур курссемшĕн те экзамен тытмалла, урăхла каласан, авалхи чĕлхесене те пĕлмелле. Паллă ĕнтĕ, вырăсла та лайăхах пĕлмен чăвашшăн ку çăмăл ĕç пулман. Кунсăр пуçне, Охотников хăй те обществăлла наукăсемпе чĕлхесене кăмăлласах каймастчĕ, çавăнпа та ку енĕпе унăн пултарулăхĕ те пысăках марччĕ. Çапах та Володя, гимназин юлашки икĕ класĕнче унăн хăйĕн урокĕсем нумай пулин те, çав чăваша çулталăк çурă — икĕ çул хушшинче вĕрентсе хатĕрлеме килĕшрĕ. Ăна çапла вĕрентме Володьăна пирĕн килйыш лайăх пĕлекен çын—чăваш шкулĕн инспекторĕ Яковлев сĕннĕччĕ. Охотников вара Володьăпа пĕр вăхăтрах гимназире экзамен тытрĕ те университета вĕренме кĕчĕ. Тата, калас пулать, Володя ăна пĕр тӳлевсĕрех вĕрентрĕ, мĕншĕн тесен Охотниковăн тӳлеме укçи те пулман».[3]

Н. М. Охотникова Владимир Ильич мĕнле пулăшнине тата В. Н. Никифоровăн 1925 çулта çырнă асаилĕвĕсенчен те курма пулать. «Охотников, — тет Никифоров, — Владимир Ильичран час-часах пулăшу ыйтатчĕ, Владимир Ильич вара хавасланса пулăшатчĕ. Охотников ăнланманнисене пурне те питĕ тĕплĕн ăнлантарса паратчĕ. Тепĕр чухне Охотников шкул хуралçи урлă, час-часах Чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасем урлă учебникри пĕр-пĕр йывăр ыйтăва ăнлантарса пама ыйтса çыру çырса яратчĕ. Хуралçă е вĕренекен ача Владимир Ильичран ответ илсе таврăнатчĕ, е Ульянов килте çук, тесе Охотникова хăй çырăвне каялла паратчĕ».

---

[1] Иван Яковлевич Яковлев, 1848—1930», 45 стр.

[2] **Б. Волин.** В. И. Ленин в Поволжье. Госполитиздат, 1955, 17 стр.

[3] **А. И. Ульянова-Елизарова.** Детские и школьные годы Ильича. Детгиз Министерства просвещения РСФСР, М.-Л. 1947г., 25 стр. (Ку кĕнекене чăвашла та кăларнă).

В. Н. Никифоров асаилĕвĕсенче пĕр ытла та интереслĕ вырăн пур. «Иловайский çырнă «Пĕтĕм тĕнче истори учебникĕнче» 1887 çулти апрелĕн 26-мĕшĕнче Охотников çырнă хут татки сыхланса юлнă: «Владимир Ильич! 30-мĕш §-ри (вăтам ĕмĕрсен историйĕ) Вельфсемпе (гвельфсем.—*Сост.)* Гибелинсен кĕрешĕвĕ. Генрих Гордый тата III-мĕш Конрад мĕнле партире пулнă? Н. Охотников».[1]

Çак çырăва Владимир Ильич ответ паман, мĕншĕн тесен вăл ун чухне килте пулман.

Владимир Ильич вырăс литературипе те Охотникова нумай пулăшнă. Мĕнле кĕнекесем вуламаллине кăтартса панă. Экзаменра Охотников «Двенадцатый год по произведениям русских писателей» ятлă темăпа сочинени çырнă. Н. М. Охотников пур предметсемпе те гимнази экзаменне ăнăçлă тытнă.

Н. М. Охотникова Владимир Ильич вĕренме пулăшнине вырăссен паллă драматургĕ И. Ф. Попов хăйĕн «Семья» («Килйыш») ятлă пьесинче аван кăтартса панă (ку пьесăна И. С. Максимов-Кошкинский чăвашла куçарнă). Çакна тата Н. Нечволодовăпа Л. Резниченко çырнă «Ленин çамрăклăхĕ» («Юность Ленина») ятлă повеçре лайăх сăнарласа кăтартнă.

Чăваш халăх поэчĕ П. П. Хузангай хăйĕн «Октябрь çути» ятлă статьинче çитмĕл çул каялла пулнă ĕçсем çинчен çырнă вырăнта хăйне вĕрентнĕ Н. Я. Яковлева учительница асаилевĕсене илсе кăтартнă:

«Чĕмпĕрти чăваш шкулне гимназист тумтирĕ тăхăннă пĕр çамрăк ача çÿретчĕ. Вăл, таçталла васканă пек малалларах ÿпĕнсе, хăвăрт утса иртетчĕ. Унăн хăмăр куçĕ питĕ чĕрĕччĕ, йăлт-ялт пăхкаласа илетчĕ. Картусĕ хĕрринчен сарă çÿçĕ курăнатчĕ. Тепĕр чух, вăл картусне хывса утуçăн, çемçе кăтри хĕвел çинче ылтăн пек йăлтăртатса пыратчĕ. Эпир ăна ун чух «Никифор Михайловича вĕрентекенни» тесе пĕлеттĕмĕр. Хăй, Никифор Михайлович Охотников, пире арифметика вĕрентсе пурăнатчĕ. Кам пĕлме пултарнă ун чух çав çутă тÿмеллĕ лутрарах ача, пĕр чăваша çеç мар, пĕтĕм этемлĕхе вĕрентессе?!»[2]

Вунçичĕ çулти Володя Ульянов, Чĕмпĕрти гимназирен вĕренсе тухсан, 1887 çулта Хусан университечĕн юридически факультетне вĕренме кĕнĕ, тепĕр çултан, 1888 çулта, Никифор Охотников, 28 çулти чăваш, çав университетăн физикăпа математика факультетне вĕренме кĕнĕ. Анчах талантлă математик университетăн 4-мĕш курсĕнче ÿпке чирĕпе чирлесе вилнĕ.

И. Н. Ульянов вырăс мар халăхсене çутта кăларас тĕлĕшпе

---

[1] «Молодые годы В. И. Ленина» кĕнеке, «Молодая гвардия» издательстви кăларнă, 1957 ç., 168 стр. (Асăрхаттарни: кĕнекере Никифоров хушаматне тĕрĕс мар çырнă, Никифориев тенĕ.)

[2] «Коммунизм ялавĕ», 263-мĕш номер, 1957 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕ.

малта тăракан çын пулнă. Вăл хăйĕн ачисене вырăс мар халăхсене тиркемелле мар кăмăлпа вĕрентсе воспитани панă.

Вырăс мар халăхсене хут вĕрентес ĕçре Илья Николаевича вырăс реакционерĕсем кансĕрленĕ. Вĕсем: «Вырăс мар халăхсен ачисене тăван чĕлхене вĕрентмелле мар» тенĕ, «инородецсене» пусмăрласа вырăса кăларас политика тытса пынă, вырăс мар халăхсем çинчен, вĕсем вĕренме, хăйсен нацилле культурине аталантарма пултараймаççĕ, тесе ирсĕр элек сарнă. Хăйĕн аслă учителĕсен Пироговăн, Ушинскин тата 60-мĕш çулсенчи ытти педагогсен вĕрентĕвне тытса пырса, И. Н. Ульянов вырăс мар халăхсен ачисене хăйсен тăван чĕлхипе вĕрентессишĕн тăнă. Вăл тĕрлĕ халăхсем çинчен акă мĕнле çырнă: «Ирçе-мăкшă çынниннче вĕренес туртăм пур», «тутарăн наукăсем вĕренес пултарулăх пур», тенĕ. Вăл шкула çӳрекен чăваш ачисем кĕнекесем вуланишĕн, задачăсем тунишĕн чун-чĕререн савăннă.

И. Н. Ульянов халăхран нихçан та ютшăнман: вырăсĕ, чăвашĕ, тутарĕ, ирçе-мăкши—пурте унăн ырă кăмăлне туйса тăнă, хăйсене çывăх çын тесе шутланă. Илья Николаевичра этемпе гражданин пахалăхĕсем лайăх пĕрлешсе тăнă.

И. Н. Ульянов вырăс мар халăхсен ачисене хут вĕрентесшĕн мĕн тери тăрăшнине çак тĕслĕх те яр-уççăн кăтартса парать.

1874 çулта, Иван Яковлевич Хусанта вĕреннĕ чухне, Юхма чăваш ачи, Иван Яковлевич Зайцев ятлăскер, Чĕмпĕре пырать. Ялта вăл хур-кăвакал пăхса пурăннă. Чĕмпĕре ашшĕ-амăшĕнчен вăрттăн пынă. Хур кĕтӳçи шкула кĕресшĕн пулнă. Хăйĕн телейне пула, чăваш ачи Чĕмпĕрте шăпах халăх училищисен директорĕ патне пырса тухнă та хăйĕн шухăшĕсене йĕре-йĕре каласа панă. Илья Николаевич чăваш ачине хĕрхеннĕ, шкула кĕме пулăшнă.

Қаштах вăхăт иртсен, Зайцев шкулта вĕреннĕ чухне ĕнтĕ, И. Н. Ульянов шкула В. А. Қалашников учитель патне, арифметика урокне, пырса кĕнĕ. Илья Николаевич хăй паллана чăваш ачине доска патне чĕнсе кăларнă. Зайцев задачăна пĕр такăнмасăр шутласа панă.

«Хорошо, иди на место!»—тенĕ халăх училищисен директорĕ.

Чăваш ачи хăйĕн вырăнне кайса ларнă та çакăн пек шухăшлама тытăннă: «Эпĕ ученик çеç, çапах та «р» саспаллине тĕрĕс калама пĕлетĕп, акă вăл директор, нумай вĕреннĕ, питех те пысăк çын, «р» саспаллине калама пĕлмест, «гг» тесе калать». (Çакна вăл «гривенник» сăмаха каланă чух асăрханă-мĕн.)

Вырăс чĕлхи урокĕнче ачасене «Впечатления сегодняшнего дня» темăпа сочинени çырма хушнă. Зайцев çакăн чухне И. Н. Ульянов çинчен çырса панă. Анчах учителе ку килĕшмен: хăйĕн ученикĕ çырнисене вăл хĕрлĕ кăранташпа хĕреслĕн туртса хунă та «О» лартнă.



Иван Яковлевич Зайцев. 1935 ç.

Илья Николаевич хурланса ларакан ача патне пынӑ, унӑн тетрадьне илсе пӑхнӑ.

«Эсир, Василий Андреевич, ку ачана мӗншӗн хӗрлӗ хӗрес орденӗпе тата ҫав тери пысӑк олмапа парнелерӗр? — тесе ыйтнӑ Ульянов. — Ку сочинени — чи лайӑххисенчен пӗри. Хӑвӑр панӑ темӑна вулӑр-ха...» тенӗ директор. Унтан вара вӑл чӑваш ачин сочиненийӗ вӗсне: *«Отлично. Ульянов»,* тесе ҫырса хунӑ.

1937 ҫулта И. Я. Зайцев, хӑй ача чухне 1874 ҫулта пулса иртнӗ ӗҫе аса илсе, Н. К. Крупская патне янӑ ҫырӑвӗнче: «Ҫакна эпӗ нихҫан та манмӑп: ӑна манма ҫук», тесе ҫырнӑ.

Н. К. Крупская хӑйӗн пӗр статьинче И. Я. Зайцев асаилӗвӗсене каласа кӑтартнӑ хыҫҫӑн: «Ильич хӑйӗн ашшӗн ҫулӗпе пынӑ...», тет. Унтан вара статьяри шухӑшсене пӗтӗҫтерсе ҫапла ҫырать: «Сахал йышлӑ халӑхсем ҫине Илья Николаевич мӗнле пӑхни Ильичӑн пӗтӗм революцилле ӗҫӗнче палӑрса тӑрать: ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗн никӗсӗсене хывса, Ленин мӗн тери пысӑк ӗҫ тунине пурте пӗлеҫҫӗ».[1]

Илья Николаевич ӗҫӗнчи паха тӗслӗхсене Иван Яковлевич та вӗренсе ӑса илнӗ. Вӑл чӑваш халӑхне вырӑс халӑхӗпе туслӑ пулма вӗрентнӗ, вырӑс халӑхӗ пек чӑтӑмлӑ пулса пурӑнма, Российӑшӑн, халӑхшӑн чунтан-вартан парӑнса ӗҫлеме, кӗрешме вӗрентнӗ.

* * *

И. Н. Ульянов 70 ҫул ӗлӗк, 1886 ҫулти январӗн 12-мӗшӗнче, Чӗмпӗрте вилнӗ, ҫав кун унӑн чӗри ӗмӗрлӗхех тапма пӑрахас умӗн, сехет ҫурӑ малтан, И. Н. Ульянов патӗнче И. Я. Яковлев пулнӑ.

Ашшӗ вилнӗ вӑхӑтра Дмитрий Ульянов Яковлевсем патӗнче пулнӑ. И. Н. Ульянов вилни ҫинчен И. Я. Яковлева чи малтан Владимир Ильич пырса пӗлтернӗ.

Ҫак кунсем ҫинчен Иван Яковлевич ывӑлӗ А. И. Яковлев ҫакӑн пек ҫырать:

«Эпир Дмитрий Ульяновпа (вӑл ун чухне вунпӗр ҫулта ҫеҫчӗ) Сӗве шывӗ хӗрне анакан чӑнкӑ ту ҫинче ывӑнса ҫитиччене ҫунашкапа ярӑннӑ хыҫҫӑн киле таврӑнтӑмӑр та пысӑк пӳлӗмре чӳречесенчен ӳкекен уйӑх ҫуттинче пӗр-перинпе кӗрешме тытӑнтӑмӑр. Сасартӑк алӑк сасси илтӗнсе кайрӗ, малти пӳлӗмре Владимир Ильич сасси илтӗнчӗ, ун чухне вӑл Чӗмпӗрти классически гимназин 7-мӗш класӗнче вӗренетчӗ...

Владимир Ильич пирӗн патӑмӑра килсен яланах тумтирне хыватчӗ. Ку чухне вӑл хывӑнмарӗ, малти пӳлӗмре манӑн аттене тем ҫинчен шӑппӑн хӑвӑрт-хӑвӑрт каласа пачӗ. Унӑн пичӗ шур-

---

[1] **Н. К. Крупская.** Из воспоминаний о В. И. Ленине («Воспоминания родных о В. И. Ленине» ятлӑ кӗнекере пичетленнӗ. Мускав, 1955 ҫ., 171—187 стр.).



И. Я. Яковлев хӑйӗн киленче. 1910 ç. Ӳкерчӗкӗ Ҫ. В. Ивановӑн.

са кайнă, тутисене çыртнă, куçĕсем тĕссĕрленнĕ. Шăллĕне чĕнсе, вăл лăпкăн, анчах хирĕçлеме çук сасăпа калать:

— Митя, тăхăн, киле кайăпăр.

Мĕн пулнине ăнланман, анчах кăмăлĕ хускалнă Митя тумтирне хăвăрт тăхăнать те пиччĕшĕ хыççăн утать. Владимир Ильич питне хуйхă сăнĕ çапнă, вăл ним шарламасăр сывпуллашса тухать.

Шăллĕпе пиччĕшĕ кайсан, эпĕ атте патне чупса пытăм та мĕншĕн Митьăна ытла час илсе кайни çинчен ыйтрăм. Атте куççульне шăла-шăла:

— Илья Николаевич вилнĕ, — терĕ.

Нумай вăхăт иртсен, совет саманинче, эпир Владимир Ильичпа хамăр калаçса ларнă чухне вăл хăйĕн шăллĕне 1886 çулта пирĕн килтен илсе кайнине аса илтĕмĕр те, вăл вара: эпĕ çав каçăн кашни самантне лайăх астăватăп, терĕ».[1]

(Ашшĕ вилсен, Яковлевсем патне хăйĕн пĕчĕк шăллĕне Митьăна чĕнме В. И. Ленин пыни çинчен калакан асаилӳсем Дмитрий Ульяновăн та пур).[2]

И. Я. Яковлев тепĕр кунне, январĕн 13-мĕшĕнче, Н. И. Ильминский патне çырнă çырăвне: «Ĕнер пилĕк сехетре, каштах чирлесе пурăннă хыççăн, Илья Николаевич Ульянов вилсе кайрĕ. Çав кĕтмен вилĕм пире пурне те хытă тĕлĕнтерчĕ. Сехет çурă малтан эпĕ ун патĕнче пултăм, унпала нумайччен калаçрăм», тесе пуçлать.[3]

Қаçхине, Илья Николаевича тепĕр кунне çĕре чикес тенĕ чухне, чăваш шкулĕнче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем пурте Ульяновсем патне пынă, вĕсен хорĕ Илья Николаевич тупăкĕ умĕнче нумайччен хурланчăк юрăсем юрласа тăнă. Пытарнă çĕре те пурте кайнă, И. Н. Ульянова çĕре чикнĕ чух, кашниех тăпра ывăçласа илсе, тупăк çине «тăпру çăмăл пултăр» тесе пăрахнă.

...И. Н. Ульянов Чĕмпĕр кĕпĕрнинче вунçичĕ çул ĕçленĕ. Илья Николаевич тăрăшса ĕçленине пула Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи шкулсен хисепĕ 450 çитнĕ.[4] Вăл чăваш ялĕсенче малтанхи тапхăрта шкулсем Хутар салинче (Çĕмĕрлĕ р.), Паньтăк ялĕнче (Хĕрлĕ Чутай р.), Анастасово ялĕнче (Пăрачкав р.), Çĕнĕ Чăваш-Чукал ялĕнче (Шăмăршă р.) тата ыт. çĕрте те уçнă. Çак шкулсене вăл тĕрĕслесе пулăшса тăнă. Ку шкулсемсĕр пуçне, 1870, 1871 тата 1872 çулсенче Илья Николаевич Қанна Кушки,

---

[1] **А. И. Яковлев.** Четыре встречи с В. И. Лениным. «Исторический журнал», 1—2-мĕш №№, 1942, 160 стр.

[2] «Молодые годы В. И. Ленина», 155 стр.

[3] «Иван Яковлевич Яковлев» кĕнекен 233 стр. пăхăр.

[4] «Воспоминания родных о В. И. Ленине», 1955 ç., 11 стр.



Александр Ильич Ульянов. 1887 ç.

Чутай, Штанаш, Ураскилт, Аслă Чурачăк, Шăмăршă, Тури Туçа тата ытти шкулсене тĕрĕслеме пыра-пыра кайнă.

И. Н. Ульянов учительсем хатĕрлекен курссем уçнă, вĕсене «Ульянов курсĕсем» тенĕ, çав курссенче вĕренсе учитель пулнă çынсене «ульяновецсем», тенĕ.

Ун чухнехи çулсем çӳреме начар пулнă. Çапах та Илья Николаевич хăраса тăман: вăл çил-тăман вăхăтĕнче те, йĕпе-сапара та кĕпĕрне тăрăх çӳренĕ, ялсенчи шкулсенче пулнă, нумай чухне хресчен пӳрчĕсенче çывăрнă, хресчен апатне çинĕ.

Аслă педагогăн вăй-халĕ халăхшăн, тăван çĕршывшăн ырми-канми ĕçре çунса пĕтнĕ.

И. Н. Ульянов вилсен те, Ульяновсемпе Яковлевсен килйышĕ хушшинчи туслăх вăйсăрланман, пĕтмен, — пачах урăхла, вăл татах та вăйлăланнă. Илья Николаевич вилсен тепĕр çултан, 1887 çулта, Ульяновсен çемйине тепĕр пысăк инкек пырса тивнĕ. Çавăн чухне Петербургра студентсен ушкăнĕ III-мĕш Александр патшана бомба пăрахса вĕлерме тăнă. Çав ушкăнта Илья Николаевичăн аслă ывăлĕ, Питĕрти университетăн IV курсĕнче вĕренекен студент — Александр Ильич Ульянов та пулнă. Александр Ульянова тата унăн юлташĕсене тĕрмене хупнă.

Çак йывăр кунсенче Ульяновсене «тусĕсем» пурте тенĕ пекех «паллами» пулнă. Авалхи туссенчен Иван Яковлевич пĕр-пĕччен тенĕ пек тăрса юлнă: вăл Ульяновсенчен писмен, вĕсемпе тата та çывăхрах пурăнма пуçланă. Çавăн чухне И. Я. Яковлев, Александр Ильича мĕнле те пулин хăтарас тесе, Ильминский профессор урлă Ульяновсене пулăшма тытăнса пăхнă.[1]

И. Я. Яковлевпа М. А. Ульянова, Александр Ульянова çăлас шутпа, Н. И. Ильминский урлă Питĕре хут ярас тесе, Хусана кайнă. Ильминский профессорăн ун чухне столицăри пысăк çынсем хушшинче çывăх паллакан çынсем нумай пулнă, унăн сăмахне итленĕ. Чĕмпĕртен пысăк хуйхăпа килнĕ И. Я. Яковлевпа М. А. Ульянова çамрăк Александр Ульянов ĕçĕ çинчен профессора каласа панă. Н. И. Ильминский çавăн чухнех Çутĕç министрĕ патне телеграмма янă, çамрăк студентăн йывăр шăпине çăмăллатма ыйтнă. Ун чухнехи Çутĕç министрĕ Делянов граф телеграммăна хирĕç çиллĕнчех ответ панă: ку ĕçе эпĕ те, Николай Иванович та улăштарма пултараймастпăр, çитменнине тата, «кая юлнă ĕнтĕ» («да и поздно»), тесе пĕлтернĕ.

Революци юхăмĕнчен хăраса, чĕтресе пурăнакан ӳкĕтсĕр патша хăйĕн ирсĕр ĕçне хăвăрт тунă. 1887 çулхи майăн 8-мĕшĕнче, шурăмпуçĕ кăшт çеç кăвакарса килнĕ вăхăтра, Шлиссельбург тĕрмин килкартинче Александр Ульянова тата

---

[1] **«Иван Яковлевич Яковлев», 42 стр.**



Владимир Ильич Ульянов (Ленин). 1887 ç.

унăн тăватă юлташне суд приговорне вуласа панă. Приговора итленĕ хыççăн кăвар чĕреллĕ çамрăксем, патша влаçне хирĕç кĕрешĕве тухнă паттăр революционерсем, пĕр-пĕринпе сывпуллашса уйрăлнă, нихăшĕ те каçару ыйтман. Мăйкăç патне малтан Осипанова, Генералова тата Андреюшкина илсе пынă. Кăштах вăхăт иртсен, вĕсен кĕлеткисене илсе пăрахнă та çынçакан патне Ульяновпа Шевырева илсе хăпартнă...

Харсăр çамрăксем пĕрре пуçланă çула пăрахман. Юлашки сывлам тухиччен вĕсем шикленмен, ӳкĕнмен, каçару ыйтман.

Патша правительстви революцилле юхăма хирĕç темле хаяр кĕрешнĕ пулин те, революцилле шухăша тĕрмене хупма пултарайман, такан çине çакайман, — вăл ӳссех, сарăлсах пынă.

Александр Ульянов сăнарĕ, çĕнĕ ăрусен паттăрлăхне кăтартакан тĕслĕх пулса, халăх ăс-тăнне кĕрсе юлнă.

Пиччĕшĕн ĕçне Владимир Ульянов малалла туса пынă, анчах вăл 17 çулта чухнех патшана хирĕç урăхла кĕрешмеллине ăнланса илнĕ. Пиччĕшне çакса вĕлернине пĕлсен, В. И. Ленин: «Çук, эпир унашкал çулпа каймăпăр. Ун пек çулпа мар каймалла!» тенĕ. («Нет, мы пойдем не таким путем. Не таким путем надо идти!»).[1]

* * *

В. И. Ленин — аслă революционер, ĕççыннисен, партин генилле учителĕ — И. Я. Яковлевăн пурнăçне, унăн ĕç-хĕлне лайăх пĕлсе тăнă. В. И. Ленин хăйĕн ашшĕн тусне пулăшнă, ун хутне кĕнĕ.

...И. Н. Ульяновăн ывăлĕсемпе хĕрĕсем ашшĕ-амăшĕн тусне нихçан та манман. Вĕсем И. Я. Яковлева яланах пулăшнă.

1928 çулта РСФСР Çутĕç комиссариачĕ И. Я. Яковлев çуралнăранпа 80 çул çитнине тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ пуçланса кайнăранпа 60 çул çитнине палăртнă.

Мускавра пулса иртнĕ чаплă ларăва чи малтан пыракансенчен А. И. Ульянова- Елизарова, Н. К. Крупская, М. И. Ульянова тата Д. И. Ульянов пулнă. Вĕсене пурне те чаплă пухăвăн президиумне суйланă.

Çутĕç халăх комиссарĕ А. В. Луначарский çав пухура хăйĕн сăмахне çапла пуçланă: «Эпир чăваш шкулĕн ытти мĕнпур халăхсемшĕн питех те паха тĕслĕх пулса тăракан ĕçĕн итогĕсене пĕтĕçтерсе палăртма пухăнтăмăр...»—тенĕ.[2]

...И. Я. Яковлевăн чăваш халăхĕшĕн тунă пархатарлă ĕçне хакланă чухне эпир яланах аслă Ленинăн 1918 çулта Чĕмпĕр

[1] «Ленин Владимир Ильич. Краткая биография», иккĕмĕш изд., 1955, 7 стр.
[2] «Известия» хаçат, 241-мĕш №, 16. X. 1928 ç.


ПРЕДСѢДАТЕЛЬ
НАРОДНЫХЪ КОММИССАРОВЪ

Симбирскъ

Предсѣдателю
Совдепа

Сообщите по телеграфу обстоятельства условія избранія предсѣдателей чувашской женской и мужской учительских семинарій. Меня интересуетъ судьба инспектора Ивана Яковлевича Яковлева, 50 лѣтъ работавшаго надъ національнымъ подъемомъ чувашъ и претерпѣвшаго рядъ гоненій отъ царизма. Думаю, что Яковлева надо не отрывать отъ дѣла его жизни.

Предсѣдатель Совнаркома Ленинъ

В. И. Ленин 1918 çулти апрелĕн 20-мĕшĕнче Чĕмпĕр Совдепне И. Я. Яковлев хутне кĕрсе янă телеграмма.

Совдепне И. Я. Яковлев пирки янӑ телеграммине тӗпе хуратпӑр. Ҫакӑн пек ҫырнӑ унта:

«Чӗмпӗр Совдеп председательне.

Чӑвашсен учительсем хатӗрлекен хӗрачасемпе арҫын ачасен семинарийӗсен председательне суйласси мӗнле пулса иртни ҫинчен телеграфпа пӗлтерӗр. Мана Иван Яковлевич Яковлев инспекторӑн кун-ҫулӗ интереслентерет, вӑл аллӑ ҫул хушши чӑвашсене наци тӗлӗшпе ҫӗклес тесе ӗҫленӗ, патша йӗрки ӑна темиҫе хут та хӗсӗрленӗ. Яковлева хӑйӗн ӗмӗр тӑршшӗнче туса пынӑ ӗҫӗнчен уйӑрма кирлӗ мар тесе шутлатӑп.

Совнарком председателӗ Ленин».[1]

В. И. Ленин телеграмминче Яковлевӑн аллӑ ҫул хушшинчи ӗҫне историлле хак панӑ: «Чӑвашсене наци тӗлӗшпе ҫӗклес тесе ӗҫленӗ» («работавшего над национальным подъемом чуваш...» тенӗ вырӑсла). Ку сӑмахсен тупсӑмӗ акӑ мӗнле: И. Я. Яковлев чӑваш халӑхне хӑйӗн историри вырӑнӗпе рольне ӑнланса илме, аслӑ вырӑс халӑхӗпе тӑванла пурӑнма, унӑн малта пыракан культурине йышӑнса тата хӑйӗн нацилле культурине аталантарса этемлӗх культури ҫулӗ ҫине тухма вӗрентнӗ, унӑн нацилле ӑс-тӑнне йӗркелес тесе тӑрӑшнӑ.

И. Я. Яковлев ӗҫӗ, патша влаҫӗ хытӑ хӗсӗрленӗ пулин те, ҫавӑн чухнехи историлле аталанӑва тата обществӑлла туртӑма пула, сая кайман, акнӑ вӑрлӑх шӑтнӑ та вӗри ҫанталӑка та, шартлама сивве те тӳссе иртнӗ.

И. Н. Ульянов пулӑшнипе уҫнӑ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ аллӑ ҫул хушшинче чӑваш халӑхӗ валли пин ҫынна яхӑн учитель хатӗрленӗ. Вӗсем чӑваш ялӗсенчи пуҫламӑш шкулсенче вӗрентнӗ, халӑх хушшинче ӑслӑлӑх ҫутти сарнӑ.

И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлевӑн пархатарлӑ ӗҫне пула чӑваш халӑхӗн хут пӗлекен йышӗ Октябрьти социализмла революци тӗлне 18% ҫитнӗ.

Хусан университетӗнче вӗреннӗ чухне И. Я. Яковлев, вырӑс филологӗпе В. А. Белилинпа пӗрле, чӑваш чӗлхин привайхи алфавитне туса хатӗрленӗ, чӑваш ҫырулӑхне тунӑ. И. Я. Яковлев, чӑваш культурине аталантарас ӗҫре аслӑ вырӑс культурин пуянлӑхӗпе усӑ курмалла тесе шутланӑскер, чӑваш алфавитне вырӑс алфавичӗн никӗсӗ ҫинче туса хунӑ. Ҫак ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ мӗн тери пысӑк пулнине Октябрьти революци хыҫҫӑнхи вӑхӑт питех те лайӑх кӑтартса пачӗ. Совет саманинче пирӗн ҫӗршыври ытти хӑшпӗр халӑхсем те хӑйсен араб алфавичӗпе е латин алфавичӗпе усӑ курса тунӑ алфавичӗсене пӑрахӑҫларӗҫ те вырӑс алфавичӗн никӗсӗ ҫинче йӗркеленӗ алфавитсем туса хучӗҫ. Ҫакна шута илсе, эпир чӑваш чӗлхи телейӗшӗн, унӑн алфавичӗшӗн,

[1] Ленинский сборник. XIX, 263—264 стр.



РОССІЙСКАЯ
Федеративная
Совѣтская Республика.
ПРЕДСѢДАТЕЛЬ
СОВѢТА
НАРОДНЫХЪ КОМИССАРОВЪ.
Москва, Кремль.

Симбирск
Губчека

Не выселяйте старика
Ивана Яковлевича Яковлева
и его жену из квартиры
исполнение сообщите

Предсовнаркома Ленин

В. И. Ленин 1919 çулта Чӗмпӗре И. Я. Яковлева хӑйӗн хваттерӗнчех хӑварма хушса янӑ телеграмма.

çав алфавит ытти хăшпĕр чĕлхесене те ырă тĕслĕх кăтартнишĕн савăнатпăр.

И. Я. Яковлев чăваш чĕлхине аталантарас, унăн пĕрлĕхне тăвас ĕмĕтпе ĕçленĕ. Халăха вĕрентес тата воспитани парас ĕçре тăван чĕлхе мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине И. Я. Яковлев лайăх пĕлнĕ. Унăн шухăшĕсем çакăн пек пулнă: тăван чĕлхепе усă курса, ачасен ăс-тăнне малалла аталантарма, вĕсен шухăш-кăмăлне улăштарма, кивĕ ăнланусем вырăнне çĕнĕ ăнланусем пама пулать, тăван чĕлхепе вĕрентсе чăваш халăхне вырăс культурипе çыхăнтарма пулать. Тăван чĕлхепе усă курмасан, çав ĕçе тума май çук. И. Я. Яковлев çапла каланă: халăх хăйĕн чĕлхине мантăр тени вăл çав халăха пĕтерес тенипе пĕрех; чĕлхе хăйне туса хунă халăх пĕтсен çеç пĕтет, тенĕ.

Чĕлхе вăл, марксизм-ленинизм вĕрентнĕ тăрăх, нацилле культура форми пулса тăрать. И. Я. Яковлев, чăваш чĕлхине аталантарса, чăваш культурине çĕклентерме тăрăшнă. Çакă вăл шкул ĕçне, çырулăха, литературăна, литература чĕлхине аталантарас тесе ĕçленине пĕлтерет.

И. Я. Яковлев 1912 çулта хăйĕн ĕçĕсене хакласа çакăн пек çырнă: «Эпĕ хамăр пурнăçăн задачи вырăнне вырăс халăхĕ, историлле кун-çула пула, хăйĕн йышне кĕртнĕ нацисенчен пĕрне—чăвашсене вырăс халăхĕпе çывхартас задача лартрăм».

Çак задачăна пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре И. Я. Яковлев И. Н. Ульяновпа, унăн генилле ывăлĕпе туслă пулни вĕсем тата ытти вырăс çыннисем И. Я. Яковлева, чăваш халăхне пулăшни, аслă вырăс халăхĕ пулăшни мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине хакласа çитерме те çук.

Çак вăхăта та асăнмасăр иртме çук. 1919 çулта, фабрикăсемпе заводсенчи рабочисене лайăхрах хваттерсене куçарма тытăнсан, Чĕмпĕрте Иван Яковлевич хваттерне туртса илме шутлакансем пулнă. Çакăн çинчен И. Я. Яковлев В. И. Ленина пĕлтернĕ. Вара августăн 28-мĕшĕнче Чĕмпĕрти Губчекана В. И. Ленин çакăн пек телеграмма янă:

«Иван Яковлевич Яковлев старикпе унăн арăмне хваттертен ан кăларăр. Çакна ĕçе кĕртни çинчен пĕлтерĕр. Совнарком председателĕ Ленин».[1]

Ку тапхăрта пирĕн çĕршывра граждан вăрçи алхасса кайнă. Колчак Атăл патнелле талпăнса килнĕ. Çурçĕртен, кăнтăртан, хĕвелтухăçĕнчен Англи, Америка, Франци, Япони тата ытти патшалăхсен çарĕсем хĕснĕ. Тăшмансене хирĕç пĕтĕм çĕршыв çĕкленнĕ, коммунистсем, комсомолецсем фронта тухса кайнă. 1919 çулти апрель уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар Колчака вăйлăн пырса

[1] Ленинский сборник. XXIV, 181 стр.

çапнă та, Колчак çарĕсем чакма тытăннă. Хĕвелтухăç фронтĕнчи ĕçсем çуркуннерен пуçласа çеç лайăхланма тытăннă: Хĕрлĕ Çар тăшмана пĕтĕм фрончĕпех хăваласа пынă, шуррисенчен Ĕпхӳ тата ытти хуласене каялла туртса илнĕ, Екатеринбург, Пермь хулисем патне çывхарнă, Колчак Çĕпĕрелле чакнă.

Çак çулхине, июнь уйăхĕн вĕçĕнче, Коммунистсен партийĕн Тĕп Комитечĕпе В. И. Ленин пуçарнипе Атăл тăрăх Кама патне çитиччен, унтан Кама тăрăх çӳлелле кайма «Красная звезда» («Хĕрлĕ çăлтăр») ятлă агитаци пăрахучĕ тухнă. Çав пăрахутпа каякан агитаторсем, шуррисен йĕрĕпе пырса, халăх хушшинче партипе Совет влаçĕ çинчен, партин VIII съезчĕ йышăннă решенисене хресченсене ăнлантарса памалла пулнă.

«Хĕрлĕ çăлтăр» пăрахут çинче кино, типографи, радио, кĕнеке-хаçат пулнă.

Агитаци пăрахучĕ 1919 çулти июлĕн 9-мĕшĕнче Шупашкара çитнĕ. Шупашкарта Халăх çуртĕнче Надежда Константиновна Крупская сăмах тухса каланă (халĕ ăна чысласа, 1958 çулти февралĕн 3-мĕшĕнче Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ йышăннипе çурт çине хула ĕççыннисем асăну хăми çапнă. Ун çине çакăн пек çырнă: *«Здесь 9 июля 1919 года выступала с речью перед трудящимися города Надежда Константиновна Крупская»)*.

Н. К. Крупская, «Хĕрлĕ çăлтăр» пăрахутпа хăй кайса çӳренĕ вăхăта аса илсе, çакăн пек çырнă: «Ильич хăй те пырасшăнччĕ, анчах ĕçсене пĕр минутлăха та пăрахма май пулмарĕ. Эпир тухса каяс умĕн Ильич çĕрĕпех пирĕнпе калаçрĕ, пире ăсатма вокзала пычĕ, çырусемпе, телеграфпа тăтăшах пĕлтерсе тăма хушрĕ...»[1]

«Хĕрлĕ çăлтăр» çитмелле çĕре çитсе килсен, В. И. Ленин питех те хытă савăннă. «Владимир Ильич, — тет Н. К. Крупская, — манран пурин çинчен те тĕпĕ-йĕрĕпех ыйтса пĕлчĕ; эпĕ Хĕрлĕ Çар çинчен, хресченсен шухăш-кăмăлĕ çинчен, чăвашсен, тутарсен шухăш-кăмăлĕ çинчен, халăх массисем Совет влаçне ытларах ĕненме тытăнни çинчен каласа пани ăна уйрăмах интереслентерчĕ».[2]

В. И. Ленин, Атăл тăрăхĕнче ӳссе çитĕннĕскер, унти халăхсен пурнăçне лайăх пĕлнĕ, хăй патне, сăмахран, чăвашсем пырсан, яланах чăваш халăхĕ çинчен, ăна çутта кăларас тĕлĕшпе нумай вăй хунă И. Я. Яковлев çинчен сăмах хускатнă.

* * *

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ пирки пирĕн литературăра чылай вăхăт хушши тĕрĕс мар шухăш çӳрерĕ. Çав шкула «пупсем ха-

---

[1] **Н. К. Крупская.** Воспоминания о Ленине. Москва, Госполитиздат, 1957 ç., 224 стр.

[2] Çавăнтах, 426 стр.

тĕрлекен шкул», «вăл пин пуп хатĕрленĕ», тетчĕç. И. Я. Яковлева хăйне «монархист», «пилсĕр этем» текенсем те пулчĕç. Çак йăнăш та киревсĕр шухăша халĕ ĕнтĕ сирсе пăрахнă темелле. Тĕрĕссипе илсен, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ революцичченхи вăхăтра чăвашсене çутта кăлармалли ĕçĕн тĕп вырăнĕ пулнă. Унта чăваш шкулĕсем валли учительсем хатĕрленĕ, чăваш çырулăхĕпе алфавитне туса аталантарнă, кĕнекесем çырнă, вырăс литературин классикĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă. Çав шкулта вĕренекенсем хушшинчен чăвашсен паллă поэчĕсем — К. В. Иванов, Н. В. Шупуççынни, чăваш драматургĕ И. С. Максимов-Кошкинский, паллă композиторсем Ф. П. Павлов, С. М. Максимов, чăваш чĕлхеçи Ф. Т. Тимофеев, пирĕн малтанхи хĕрарăм-писательница М. Д. Трубина тата ыттисем те тухнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чăваш интеллигенцийĕн представителĕсем чăваш культурине хăйсен пархатарлă ĕçĕпе нумай пуянлатнă, вырăс культурипе çывхартнă, туслă çыхăнусемпе çыхăнтарса пынă.

Çав шкулти учительсен коллективĕ, И. Я. Яковлев ертсе пынипе, унта вĕренекен ачасене тăван çĕршыва, Российăна юратма, хăйсен малашнехи ĕçĕпе кун-çулĕ çине тĕплĕн пăхма вĕрентнĕ. Чĕмпĕрте вĕренсе учительсем пулнă çынсем хăйсен ĕçĕнче халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăнă.

Тăван çĕршыва юратма, аслă вырăс халăхĕпе туслă пулма вĕрентни Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн чи вăйлă енĕ пулнă. Çакă вăл ăна гражданлăх çулĕ çине сулăнтарса пынă, унăн ырă традицийĕсене тĕрекленме пулăшнă. И. Я. Яковлев чăваш шкулне, унта вĕрентекенсемпе вĕренекенсене революцилле юхăмран аякра тытма тăрăшнă, анчах вăл таçти-таçти утрав çинче ĕçлесе пурăнакан шкул пулман, çĕршывра пулса иртекен пысăк событисем шкула пырса тĕкĕнмесĕр иртме пултарайман. Шкулăн гражданла традицийĕсем революци хĕлхемĕсене хăварт йышăнма пултарнă. «Шухăш ӳкрĕ пуç çине», тесе çырнă Константин Иванов «Хальхи самана» ятлă сăввинче.

1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче Чĕмпĕрти чăваш шкулне революцилле шухăшсем пырса кĕреççĕ. Çавăн чухне Яковлев шкулĕн пĕр класĕ хумханма тытăнать, хĕрлĕ ялав çĕклет.

Шкулăн гражданла традицийĕсене, унта пырса кĕнĕ революцилле шухăшсене хура реакци те пĕтерейменен. Шкулăн паха енĕ унăн пĕтĕм ĕçĕнче пурăннă, ӳснĕ, Октябрьти Аслă социализмла революци вăхăтне çитсе çĕнĕ вăй илнĕ.

Çакă пуриншĕн те паллă: И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов пуçарса янă, аллă çул ытла ĕçленĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренсе воспитани илнĕ, халăх хушшинче ĕçленĕ çынсенчен вуншар çын 1918—1920 çулсенче граждан вăрçин тĕрлĕ фрон-

чĕсенче пулнă, çĕршыв тăшманĕсене хирĕç çапăçнă, чăваш халăхĕ хушшинче Совет, Коммунистсен партийĕн ĕçне туса пынă.

Кунта çак фактсемпе тĕслĕхсене асăнмасăр иртме çук. Совет влаçне туса хунă хыççăн пĕр çултанах, 1918 çулти ноябрĕн 30-мĕшĕнче, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче (ун чухне ку шкула семинари тенĕ) коммунистсен ушкăнне организациленĕ. 1919 çулти çуркунне тĕлне вара семинарире вĕренекенсенчен 30 çын партин Чĕмпĕр кĕпĕрне комитечĕ çумĕнчи Чăваш секцийĕнче тăнă. Çав тапхăрта Колчак çарĕсем Атăл хĕрнелле çăткăн ĕмĕтпе талпăнса килнĕ, Атăл тăрăхĕнчи хуласене тытса илме шутланă. Чĕмпĕр коммунисчĕсем çав хăрушă кунсенче хăйсен ирĕкĕпе фронтсене тухса кайнă. Апрелĕн 16-мĕшĕнче семинарире вĕреннĕ тата вĕренекен коммунистсенчен 29 çын кĕпĕрнери çар комиссариатне кайса Хĕрлĕ Çар ретне тăма çырăннă. Кайрантарахпа, 1919 çул вĕçĕнче тата 1920 çулта, çав семинарире вĕреннĕ çынсенчен Хĕрлĕ Çара хăйсен ирĕкĕпе каякансем татах та пулнă. Чĕмпĕрте вĕреннĕ хĕрарăмсенчен пĕри — Евдокия Яковлевна Орлова фронта Мускаври коммунистсемпе пĕрле тухса кайнă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен 1913 çулта вĕренсе тухнă Иван Сергеевич Космовский граждан вăрçинче Чĕмпĕрти рабочисен 1-мĕш полкĕн командирĕ пулнă, ăна хаяр çапăçусенче ертсе пынă. Паттăр командир-коммунист, юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçса, герой вилĕмĕпе вилнĕ.

Иртнĕ вăхăтра тата çакăн пек калакансем те пурччĕ: И. Я. Яковлев — Ильминский ученикĕ, вăл унăн миссионерла ĕçне малалла туса пынă, тетчĕç. Чăн та, И. Я. Яковлев хăйĕн ĕçĕн пĕр тапхăрĕнче Н. И. Ильминский системипе килĕшсе ĕçленĕ, ăна пăхăнса пынă, анчах кайрантарахпа хăйĕн шухăшĕсене мала хума тытăннă. И. Н. Ульянов ĕçĕсемпе шухăшĕсем унăн ăс-тăнне прогрессивлă педагогика еннелле сулăнтарнă. Ульянов шухăшĕсен витĕмне (влиянине) пула Иван Яковлевич ытларах Ушинский, Пирогов, Толстой, Чернышевский, Добролюбов произведенийĕсене вĕренме тытăннă. Паллах, вăл çав педагогсен системине пĕтĕмпех йышăнма пултарайман, çапах та чăвашсене çутта кăларас ĕç çине урăхларах пăхма пуçланă. Н. И. Ильминский системи вак халăхсене, çав шутра чăвашсене те, христос тĕнне куçармалли, вырăслатмалли, патша чурисем тумалли система пулнă. Çапах та, çав системăра, лайăхрах пăхсан, прогрессивлă шухăшсем пулни те курăнать. Сăмахран, вăл ачасене тăван чĕлхепе вĕрентессишĕн тăнă (чăваш ачисене вара чăвашла вĕрентмелле пулнă). Ку шухăшпа И. Я. Яковлев пĕтĕмĕшпех килĕшнĕ. Ăна Ульянов та хирĕçлемен. Чăваш ачисем чăваш чĕлхине вĕренни урлă вырăс чĕлхине лайăхрах вĕренме пултарнă (пултарнă кăна мар, — вĕреннĕ те!). Ку вăл аслă вырăс халăхĕн культурине вĕренмелли, хамăр халăхăн культурине аталантар-

малли çул пулнă. Çак çул И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев туслăхне тата та ытларах çирĕплетнĕ. Шăпах çав çул çинче ĕнтĕ пирĕн аслă педагогăн-просветителĕн пахаран та паха ĕçĕ, унăн вĕрентĕвĕн прогрессивлăхĕ, демократизмĕ пуринчен те ытларах палăрнă. Халăх ĕçне туса пынăран ĕнтĕ И. Я. Яковлев, хăйĕн аллă çул хушшинчи кун-çулне хакласа, В. И. Ленин патне çырнă çырăвĕнче: эпĕ — халăх ĕçне ăнланса тăвакан, тахçанхи демократ, тенĕ.[1]

И. Я. Яковлев хăйĕн чаплă ĕçĕн пуçламăшĕнчех халăхсен туслăхĕн шухăшне чĕрене хывнă, унăн ырă пуласлăхне асран яман, яланах пысăк ĕмĕтпе пурăннă. Малтанхи тăвата ача шутĕнче пĕр вырăс ачи — Иван Исаев пулнă. Иван Яковлевич çакăн пек шутланă: чăвашпа вырăс ачисем пĕрле вĕренсе, пĕрле пурăнса пĕр-пĕрне хăнăхаççĕ, пĕр-пĕринпе туслашаççĕ, чăваш ачисем вырăс чĕлхине вĕренеççĕ. Çак паха шухăша асра тытса, Чĕмпĕрти чăваш шкулне чăваш ачисемпе пĕрле яланах вырăс ачисене те илнĕ. Учителĕн, — тенĕ Иван Яковлевич, — тăван халăха çывăх тăмалла, ачасене тăван чĕлхепе вĕрентсе, тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕ çинчен каласа парса, вырăс халăхĕпе туслă пурăнтарас тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлемелле. Яковлев хатĕрленĕ учительсем тăван халăха çывăх тăнă, унăн нушисене лайăх пĕлнĕ.

Чăваш халăхне патша чиновникĕсен йыт кĕтĕвĕсем пĕрре кăна мар тапăннă, тарçи-тĕрçисем тăрăхласа кулнă, кӳрентернĕ, мăшкăлланă. Патшан ирсĕр элекçĕ-чиновникĕсем Чĕмпĕрти чăваш шкулне те тапăннă, ăна хуптарас тесе, тем те пĕр хăтланнă, пуçлăхсем патне вăрттăн хутсем çырнă, пичетре те элек сарнă... Çапах та чăваш халăхĕ, унăн Чĕмпĕрти шкулĕ, пысăк асапсене, инкек-синкексене пăхмасăрах, пурăннă, ĕçленĕ, ĕмĕтленнĕ, шанчăкне çухатман.

Хĕн-хур тӳссе пурăнакан чăваш халăхне çут тӳммеллĕ чиновниксенчен хӳтĕлесе, вырăс халăхĕпе чăваш халăхĕ пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса пурăннине сăнаса, асра тытса, И. Я. Яковлев 1912 çулта çакăн пек çырнă: «Юн тĕлĕшĕнчен, хамăн чухăн та вăйсăр халăхпа çыхăнса тăни енчен илсен, эпĕ — чăваш, анчах та шухăш-кăмăл енчен, воспитани енчен, хамăн ăстăнăмпа пурнăç çыхăнăвĕсем енчен тата служба енчен илсен— хама аслă вырăс çемйин членĕ тесе шутлатăп, унăн хуйхи манăн чуна ыраттарнă, халĕ те ыраттарать, унăн савăнăçĕ мана савăнтарнă, халĕ те савăнтарать.

Эпĕ чăвашран çурални тата манăн воспитани мана малашне мĕн енĕпе ĕçлемеллине палăртса пачĕç. Эпĕ хамăн пурнăçăн

---

[1] «О дореволюционной культуре чувашского народа». Ученые записки ЧНИИ, вып. XV, 224 стр.

задачи выранне вырăс халăхĕ, историлле кун-çула пула, хăйĕн йышне кĕртнĕ нацисенчен пĕрне — чăвашсене — вырăс халăхĕпе çывхартас задача лартрăм...

Хĕвелтухăçĕнчи сахал йышлă халăхсем вĕсем вырăс халăхĕн пĕтĕм тĕнчери пысăк кĕлеткин пĕчĕк пайĕсем, унпа пĕрле пыракансем пулса тăраççĕ... Вĕсем унăн историлле çулĕпе пыраççĕ, унăн телейĕ — вĕсен телейĕ, унăн хуйхи — вĕсен хуйхи, унăн пуласлăхĕ — вĕсен пуласлăхĕ...»

Тепĕр 9—10 çултан, тĕрĕссипе, 1921 çулхи августăн 4-мĕшĕнче, И. Я. Яковлев хăйĕн вырăсла тата чăвашла çырнă «Духовное завещание» тенĕ çырăвĕнче (çакна вăл хăйĕн юлашки çырăвĕ, юлашки сăмахĕ тесе шутланă) каллех вырăспа чăваш халăхĕн туслăхĕ пирки çырнă. Ку çырăва хумханмасăр вулама та çук (ăна каллех хăйĕн сăмахĕсемпех каласа парар-ха):

«Вырăс халăхĕ пит пысăк халăх. Вăл ырă кăмăллă, ăслă: эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр. Унăн ăсийĕн вăйĕ, ырă кăмăлĕ, пурăнăçа малалла ярас шухăшĕ хисепсĕр нумай, нихçан та пĕтес çук. Çак халăх сире тăван выранне хурса йышăннă, хăй çемйи тунă. Вăл сире пусмăрламарĕ, сире аяла хăвармарĕ.... Эсир малалла каяс ĕçре çак халăх сире çавăтса ертсе пыракан пултăр, ун хыççăн пырăр, ăна шанса тăрăр. Çак халăхăн пурăнăçĕ пит йывăр пулнă. Хăйĕн вăрăм ĕмĕринче, йывăр пурăнăçĕнче вăл нумай хуйхă курнă, йывăр кунсем курмалла пулнă, çапах та вăл хăй чунийĕн çуттине сӳнтермен; хăйĕнчен ăслă халăх тухса каймаллине пĕртте асĕнчен яман. Вырăс халăхийĕн савăнăçĕпе эсир те савăнмалла пулăр; вăл хуйхă тӳсмелле пулсан, ăна эсир те тӳсĕр. Çапла вара малашне вăл курас çутă пурнăçа унпа пĕрле эсир те курăр; вăл малалла чаплăланса кайсан, унпа пĕрле эсир те чаплăланăр. Иртнĕ ĕмĕрсенче вырăс халăхĕ сире хĕсĕрлемен, ӳлĕмрен те вăл хĕсĕрлес çук. Ăна эсир юратса пурăнăр, унпа тачă пурăнма тăрăшăр. Кирек мĕнле хир те пукрасăр пулмасть, çапах та эсир вырăс халăхĕ хушшинче ырă кăмăллă ăслă çынсене кирек хăçан та тупăр. Тӳрĕ ĕç тума вĕсем сире пулăшĕç: çапла пуласcине ман пурăнăçра пулнă ĕçсем шантарса тăраççĕ. Хăйĕн тӳрĕ ĕçĕсене вырăс халăхĕ нумай асап курса çиеле кăларнă, çавăнпа пĕртте иккĕленме кирлĕ мар, вăл сирĕн тĕлĕшпе те ялан тӳрĕрен пырĕ. Вырăс патшалăхĕ çине шанса пурăнăр, ăна юратăр, вара вăл сирĕн аннĕр пулĕ».[1]

Малалла Иван Яковлевич хăйне пулăшнă вырăс тата чăваш çыннисене тав туса çырать.

«Эй тăван çыннăмсем! — тет вăл, — Чăн кăмăлтан тав тăватăп сире. Эсир маншăн ялан та ăшă пултăр, кăмăллă пултăр. Сиртен çакна курма эпĕ тивĕçлĕ те пулман. Çаплах тата вырăс

[1] Ку «завещанине» (халала) 1958 çулти «Чăваш календарĕнче» пичетленĕ, 147 стр.

çыннисене те нумайăшне, пит нумай çынна чунтан тав тăватăп. Ман ĕçе тума вĕсем мана нумай пулăшрĕç, чăн кăмăлтан ман енче тăчĕç. Хампа пĕрле ĕçленĕ юлташăмсене, мана пулăшса пурăннă мĕнпур çынна пурне те чунтан каласа тав тăватăп: нимĕне хапсăнмасăр вĕсем мĕнпур халăхсемпе ĕçлерĕç, вĕсемсĕр пуçне ман ĕçĕм те палăрман пулĕччĕ».

И. Я. Яковлева пулăшнă вырăс çыннисем камсем пулнине унăн нумай çырăвĕсенче курма пулать. Сăмахран, ялти шкулта вĕреннĕ чухне çамрăк Ивана Пăрăнтăк ялĕнчи Мушкеев хушаматлă вырăссем пĕрмаях пулăшнă. 1869 çулта çырнă «Краткий очерк моей жизни» ятлă алçырăвĕнче хăйне Чĕмпĕр гимназине кĕме пулăшнă çынсене асăнса, Иван Яковлевич: «Çут тĕнче ырă çынсемсĕр мар», тет. Вăл унта С. Д. Раевскине, А. И. Баратынскине, А. Е. Головинскине, И. В. Вишневскине чун-чĕререн тав тăвать.

И. Я. Яковлева Хусан профессорĕ Н. И. Ильминский нумай-нумай пулăшнă.

И. Я. Яковлева пулăшса пынă чаплă вырăс çыннисем хушшинче чи паллă вырăн йышăнса тăраканни вăл—Илья Николаевич Ульянов. Çакăн çинчен Иван Яковлевич хăйĕн 1919 çулти ноябрĕн 12-мĕшĕнче В. И. Ленин патне çырнă çырăвĕнче те калать. Унта вăл, хăйĕн хисеплĕ тусне, И. Н. Ульянова, ырă сăмахпа асăнса, Ленин ашшĕ чăвашсене, Яковлева хăйне мĕн тери нумай пулăшни çинчен çапла çырать: «Сирĕн çĕре кĕнĕ аттĕр Илья Николаевич Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх шкулĕсен директорĕ пулса ĕçлеме Чĕмпĕре килнĕ вăхăтра Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ ĕнтĕ пуçланса кайнăччĕ, вăл ăна аталанма, малалла ўсе пыма çине тăрса, ĕненсе, хытă тăрăшса пулăшса пычĕ».[1]

Малалла И. Я. Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 50 çул хушшинче чăваш халăхне пин ытла учительсемпе учительницăсем хатĕрлесе пани çинчен çырать. Çавăнтах Российăн пуласлăхĕ çирки хăй мĕн шухăшланине каласа парать. Иван Яковлевич Российăри сахал йышлă халăхсене аслă вырăс халăхĕ яланах пулăшса пырасса чи йывăр вăхăтра та шанса тăнă. Вăл ĕççыннисен вăйне ĕненнĕ, вĕсем майлă пулнă, рабочисемпе хресченсен влаçĕ халăха ырлăх кўрессе ĕненнĕ, хăй ватă пулин те, ĕçхалăхĕшĕн ĕçлесе пурăнма ĕмĕтленнĕ.

Октябрьти Аслă революци хыççăн, Совет влаçĕ вăхăтĕнче чăвашсем, вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, хăйсен социализмла хуçалăхне хăватлăн аталантарчĕç, хăйсен государство йĕркине туса хучĕç пулсан, ку вăл чăваш халăхĕ, патша вăхăтĕнче йывăр пусмăрта пурăннă

[1] «О дореволюционной культуре чувашского народа». Ученые записки ЧНИИ, вып. XV, 225 стр.

н те, çавăн чухнех наци тĕлĕшпе хăшпĕр таран аталаннин-
истори тĕлĕшпе хăшпĕр таран ӳссе, вăй пухса пынинчен,
а вара, социализмла революцие активлăн хутшăнма, çĕнĕ
ĕсене йышăнма хатĕр пулнинчен килнĕ. Ĕмĕр-ĕмĕрех аслă
варринче, яланах вырăс халăхĕпе пĕрле пурăннă, тăванла
ăнса тăнă, вырăс халăхĕнчен вĕренсе пынă чăваш халăхĕ
ализмла революцишĕн пĕтĕм вăя хума кирлине, кивĕ йĕр-
хирĕç, революци тăшманĕсене хирĕç паттăр кĕрешме кир-
ăнланса илнĕ.

Такăн пек пулнă чăваш халăхĕн историлле кун-çулĕ. Ана
ăх хăй такăрлатнă, аслă вырăс халăхĕ пулăшнă, ăна И. Н.
яновпа И. Я. Яковлев пек таса чĕреллĕ çынсем хăйсен мух-
тивĕçлĕ паха ĕçĕсемпе илемлетнĕ. Çав çул мĕнпур тăванла
ăхсене тивĕçлĕ, пурне те кирлĕ çул пулнă. Чăваш халăхĕ,
и халăхсемпе пĕрле интернационализм ялавĕ айĕнче аслă
ин кăтартнă çулпа пырса, коммунизм тăвас ĕçе хутшăнчĕ,
лă ĕçре хăйĕн пултарулăхне ирĕклĕн те сарлакан кăтартать.

И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев хушшинчи туслăх вырăс ха-
ĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи туслăхăн историйĕнче чи чаплă
лĕх пулса тăрать. Çав туслăхăн çутă çăлтăр пек ялкăшса тă-
ан шухăшĕ, пĕтĕм чăваш халăхĕн ăс-тăнне кĕрсе, чăваш
нисен чунĕсене савăнтарнă, кĕрешӳре вырăс халăхĕпе пĕр-
пыма, яланах пĕрле пулма чĕнсе тăнă.

Совет стройĕ халăхсен туслăхĕн идейине çĕнĕ вăй пачĕ, вĕ-
туслăхне нумай çӳле хăпартрĕ. Эпир, халăхсен туслăхне та-
та тĕреклетессишĕн тăрăшса, пысăк шанчăкпа калатпăр:

*Пĕр-пĕринпе туслă пурăннă чухне совет халăхĕсене нимле иман та çĕнтереймĕ!*

*В. ДОЛГОВ*

**НАВЕКИ ВЕРНАЯ ДРУЖБА**

На чувашском языке

Редактор *П. В. Денисов*

* * *

Оформление *А. Пелипенко.*

Техн. редактор *А. И. Краснов.*
Худож. редактор *М. А. Ильин.*
Корректор *Л. И. Иванова.*

НТ 02842. Сдано в набор 10.VII-58.
Подписано к печати 17.VIII.58 г.
Формат 60×92¹/₁₆. Объем в печатных листах 2,75.
Уч. изд. л. 2,42. Изд. № 498. Заказ № 989.
Тираж 3 000 экз. Цена 45 коп.

Цена 45 коп.